

ЭНТИП ВАҪҪИ

# ЮРАТУ КĔНЕКИ

Национальная библиотека ЧР
4-027168

27168-чув

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# ЭНТИП ВАҪҪИ. ЮРАТУ КĔНЕКИ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1984

*Уç, П о э з и, ăрша чатăрна—*
*çĕнелӳ хевтине чун чухласшăн*
*янкăр уçлăх хĕвелĕ мана*
*ялкăшса çупăрланă чух ăшшăн.*
*Ĕмĕрхи ĕмĕтсем çĕр çинче*
*пурнăç чăнлăхĕ пулнăшăн кунăм*
*çутă, савăк-ши?*
*Ĕç хавхинче*
*çын вăйне, кăмăлне туйрăм, куртăм.*
*Ĕмĕт — çутă. Пилсем — асăмра.*
*Чунăм сывă — ӳсет таравантлăх.*
*Илĕртӳллĕ пуласлăх — умра.*
*Килĕшӳллĕ чĕлхӳшĕн тав, халăх.*
*Хал çук мар çĕр сăнне çĕнетме,*
*хамăра çĕнелме май çук темĕр.*
*Саманамăр — савма, ĕçлеме —*
*тăнăç тăтăрччĕ çеç ĕмĕр-ĕмĕр.*
*Ирĕкре ырлăха иленме*
*хĕпĕртев пух, чĕреçĕм,— ан ывăн.*
*Тĕнчери, таврари илеме,*
*чăн, епле юратса сăвă хывмăн?!*

С(Чув)
Э67

# ЭНТИП ВАҪҪИ

## ЮРАТУ КĔНЕКИ

*Сăвăсем*
*Поэмăсем*

ББК 84.3 Чув
Э 67

ПРОВЕРЕНО
2010

27168- чув.

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Э $\frac{4702650000-151}{М 136(03)-84}$ 57—84

© Чăваш кӗнеке издательстви, 1984 ç.

# ÇУТ ТĔНЧЕ ВУЧАХĔН ĂШШИНЧЕ

## *Сăвăсем*

* * *

Тăван кĕтес çинчен эп хыврăм сăвă —
Тăнлайрĕ-ши тус-йыш сăпай сасса?
Тăват ене пăхатăп ăвăнса,
Тăван кĕтес çинчен хывсассăн сăвă...

Çуралнă ен çинчен эп хыврăм сăвă —
Çураçуллах-ши тупсăмĕ, хапи?
Çурма саспа çеç калаçмастăп-и,
Çуралнă ен çинчен хывсассăн сăвă?

Тăван Çĕршыв çинчен хыватăп сăвă —
Тăнпа, чунпа ӳсетĕп улăпла.
Тăванлă, аслă пĕрлĕхе пула
Тăван Çĕршыв çинчен хыватăп сăвă.

### Çут тĕнче вучахĕн ăшшинче

1

Хурлă кун. Хура хыпар хӳхлевĕ...
Вĕрентӳçĕ — ватă тус, шкул пуçĕ,—
йăпатса-ши?—сĕнчĕ улăп куçĕ * —
тĕлĕнтермĕш мăкăр кĕленче.

* Лупа е линза.

Сар хĕвелĕм — çут тĕнче вучахĕ.
Пухрăм çутине — ăвва чĕртет вут пăнчă.
Пичуркка хутатпăр. Çулăм. Пăчă.
Шĕл-кăвар туртатпăр киленсе.

Тăвăр майлă кив чӳлмекпеле
валеçеп ăна хаяр хĕл умĕн
вăтанса, хăпартланса хĕрӳллĕн —
тĕтĕм сӳнмĕ тăлăх килсенче.

...Тĕлĕнтермĕш мăкăр кĕленче!
Пит вăрах унпа курманччĕ усă.
Хĕвеле кĕтеп — тӳпе яр-уçă.
Мĕн чĕртейĕп манăç кĕлĕнче,
чакăр пулăшуçă —
улăп куçĕ?..

2

Çут тĕнче вучахĕн çăлтăр тĕслĕ кĕлĕ
вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçрĕ шăннă çĕр çине—
шуралать тавралăх; пас шевлеллĕ, хĕмлĕ,
пурпĕр йăпатма хĕн кӳтнĕ чĕрене.
Кăмака хутман кил евĕр уçлăх...
Сивĕ.
Чим, йăсăрланмасть-и тĕтĕм тӳпере?
Кам вĕрин-вĕрин вĕрсе ăна вăшт сирĕ?—
эй, рехетленесчĕ ăшăра тепре.

3

Асчах-и эп е ачах-и? —
хĕвел,

çут тĕнче вучахĕ,
чĕнет чĕлтĕрти ăшшине,
чĕртет — чĕтретсе — ăшрине.
...Хитреччĕ юмахăм.
Хĕллеччĕ.
Хӳхлетчĕ çил...
Куçăм хĕмленчĕ —
такам юр хырать пикенсе.
...Пĕрремĕш тумла пит çинче.

4

Каçхи çăра сĕм тĕксĕмлĕхĕ пӳлнĕ
тӳпе анин хĕлхемĕнчен вел-вел
хĕмленчĕ тухăç — хутăнчĕ хĕрӳллĕ
тӳпе вучахĕ,
кун çути — хĕвел.
Хаш! сывласа ярсассăн янкăр уçлăх,
чи вичкĕн туртăм евĕр уçă çил
тем пăшăлтатрĕ те — хура хăрушлăх
çухалчĕ...
Вăранать çĕр — пирĕн кил.

5

Тӳлеккĕн тĕсленет тăван тавралăх,
ирхи илемлĕх илĕртет куçа.
Епле мăнаçлăх!
Чĕрлĕх — чăн хуçа —
пур ырлăхне сĕнет пек тараватлăн.
Чи пĕчĕк кайăк,
пĕтĕçленнĕ йывăç,
тин çурăлнă çеçке,
çăл шăнкăрми

çак вилĕмсĕрлĕхре çĕн юрă хывĕç
манпа пĕрле —
ытарлă кун çемми.

6

Тĕнче вучахĕн ăшшинчи чун ырă —
çӳлти хĕмрен килĕмрине чĕртем.
Çак ырлăхран та ыррине-и шырĕ
Çĕрпе Хĕвел хĕр-ывăлĕ,
этем?!

* * *

Чăвашăмсем, ларар-и куçа-куçăн
Тăван Çĕршывăн çӳл йăмри айне —
хавхаланар-и, калаçар-и уççăн
кăвайт хурса арçын карти варне?
Чи ăсчаххи — асли — сăмах пуçлатăр.
Аса илер чи авалхи çемме.
Сар лакăм уçăлсан, ут пуçлă алтăр
çиçтертĕр çăлтăр тĕслĕ хĕлхемне.
Ăна нумай çул чăп тулли тулманччĕ
ват вăкăр юнĕ евĕр кăрчама.
Сăваплă йăлана кура тумлатăнчĕ
виçшер тумлам çĕре,
вута,
ума.
Ваттин сăмахĕ — çитмĕл çул туптаннăн
хĕрӳллĕн шухăш-туйăм хĕмĕнче —
пуç мимине те сухалатăр тарăн,
хĕвел те çуттăр чун-чĕм тĕнчинче...
Хулпа хул таччăн пĕрлешсен, тăванлăх

уҫма вӑй патӑр пурнӑҫ тупсӑмне.
Вара — канаш тытар: «Хастар-и халӑх?
Чысра-и асатте те асанне?
Мӗнле ҫӑлкуҫӗ, ҫӗрӗ, сӑнӗ ялӑн?
Тухман-и кӳршӗ-аршӑ вӗчӗхӗ?
Вучах ҫунать-и, ӑшӑтса, йӑл-яллӑн?
Ӑҫта, мӗнле янрать тӑван чӗлхе?
Тӗл-йӗрсӗр сивӗнмен-и ӑшӑ туйӑм
е мӑкатман-и шухӑш ҫивчӗшне?
Тӑван-пӗтен кашни хӑй тӗллӗн, уйрӑм
катасшӑн мар-и ӑраскал тӗшне?
Ёҫпе уявсенче чакман-и тимлӗх?
Туятпӑр-и тӑван ҫӗр туртӑмне?
Ятӑмӑра яман-и илӗм-тилӗм?
Ансӑрлатман-и ӗмӗр саккине?..»
...Ват кӑрчама, ут пуҫлӑ чаплӑ алтӑр
аса илтерччӗр авалхи пиле —
вара нихҫан та пулмӑпӑр вӑй-халсӑр,
ӗҫ е уяв пире пухсан пӗрле.
Эппин, туссем, ларар-и куҫа-куҫӑн
тӑтӑштараххӑн ҫӳл йӑмра айне—
сӑмах пуҫлар та калаҫар пит уҫҫӑн,
кӑвайт хурса арҫын карти варне.

* * *

Ал ҫупса мар, хӗрӳ ӗҫре хытартӑм
ал сыппине, шӑнӑрсене, хула.
Йӑнӑлтатмарӑм юптарса ытарлӑн,
сӳрӗкленсе, чеен кула-кула...
Тӳрӗлӗхе чун саврӗ!
Ёҫлӗ халӑх —
уй-хирсенчи, кӗрлевлӗ цехсенчи —
илем тӗнчинелле яр уҫрӗ алӑк:

«Пулсам унта ёҫри ҫёршыв элчи!»
Вăлах мана алмаз калем сунсаччĕ:
«Поэзи цехĕнче те мала тух.
Лăшт усăнмĕ ёҫчен алли,
ҫуначĕ,
пиҫĕхтерсен ҫурла та мăлатук...»
...Кунҫулăм канлĕ мар, анчах телейĕн
хĕвеллĕ туртăмне чĕре пĕлет.
Сăввăмсемпе-ши халăха тӳлейĕп
халь эп—илем тĕнчин элчи,
поэт?

* * *

Эп сирĕнпе пĕрле, тăван тавралăх, Атăл.
Чи хаклă тусăмсем, эп сирĕнпе—ялан.
Эсир мана-ши е эп, ҫын, сире пит хапăл?
Ҫакна туйма ҫӳҫе ҫумне эп тайăлам.
Ун ҫӳҫипе ҫулҫи чĕлтĕртетсе ҫывхарччăр—
мĕн пур-ши вĕсенчен ҫепĕҫрехxи тĕнчен?
Кӳтсе, ăшăрхаса ачашланмашкăн хатĕр,
вĕсем шух пуҫ тавра явкаланса вĕҫсен...
Ҫак вăрттăн самантра ҫӳл ҫутлăхри саркайăк
ҫурхи чĕнӳ юрри янраттарса ярсан,
синкерсĕр ырлăхран тата ăҫта-ши кайăп?!
Мĕн хирĕҫ калăп ăшшăн-ăшшăн аялтан?
— Чи ҫепĕҫ пĕрлĕх,— тем,— ан аркансам,
ан татăл,
сӳнми юратупа ҫĕнел те пуянлан.
Эп сирĕнпе пĕрле, тăван тавралăх, Атăл.
Чи хаклă тусăмсем, эп сирĕнпе — ялан!

* * *

Çунса курмасăр вут мĕнне пĕлмерĕм,—
вĕри иккен, чуна аçа çапсан...
Ăш хыпнăçем ăшша çынна пиллерĕм,
эп çавăнпа çунса кайман хальччен.

Шăнса курмасăр хĕл мĕнне пĕлмерĕм,—
пăртан та сивĕ-мĕн чĕре, кӳтсен.
Чи йывăр чух: «Тус, ăшăтма кил!» — терĕм,
шăп çавăнпа шăнса кайман хальччен.

Типсе курмасăр çăл мĕнне пĕлмерĕм,—
чăн, хаклă çăкăртан хăш чух тумлам.
Пĕр пĕчĕк юханшыв çулне пӳлмерĕм,
эп çавăнпа типсе вилмен хальччен.

Ăс пиçиччен сăмах вăйне пĕлмерĕм,—
вăл амантма, чĕртме пĕлет иккен.
Мир, юрату юрри çех кĕвĕлерĕм,
шăп çавăнпа чĕлхесĕр мар хальччен.

* * *

Темле имшер хитрелĕх мĕлки мар,
тăван илем ăсти чĕп-чĕррĕн,
ӳтлĕн,
чунлăн —
хальхи тĕлĕнмелле сăнар —
сăвва вăр-вар кĕрет,
васкатнă пек кунçулăм.
Вăл çĕнĕ эпос паттăрĕ пулас:
чăна килет-и ĕмĕрсен юмахĕ?

Хĕрӳ,
кĕрнек,
тӳр кăмăллă,
хавас —
çук, никама та парас çук вăл маххă!
Е — çепĕç вăл,
е — харсăр та сатур.
Е — хурланать,
е — савăнать вăл уççăн.
Этемлĕхри — ырри! — унра йăлт пур.
Унпа пĕрле чухне нихçан пуç усмăн.
Унпа пĕрле чи çутă ĕмĕтрен
телейлĕ те пехетлĕ пурнăç тăвăн —
кунçул кати те хăтăлĕ сĕмрен,
кĕл-хăрăмпа хуплаймĕ вутлă тăвăл...
Вăл — капăр çутçанталăк илемне
хăй тунă илемпе пит килĕшӳллĕн
пуянлатса —
çĕнетĕ çĕр питне,
арканмĕ унăн аслă килĕ ӳлĕм!

* * *

Çĕр-çанталăк тӳлек, çутă, лăпкă —
ăш вăркать, ăш çунать, лăпкă мар.
Мĕн хускатрĕ чуна? Кам-ши лăпкĕ?
Пуç — пăр евĕр, чĕре — шĕл-кăвар.
Йӳн çук мар, шухăш-туйăм йĕркеллĕ,—
мĕншĕн шиклĕ сисчӳ. Мĕн — сăлтав?
Е тиркевлĕ çынсен тĕрлĕ мелĕ
кăмăла хуçнипе тухрĕ тав?..
Апла мар пуль — кама эп хур тунă?
Кам-ши тус — чăн-чăнни, кам — тăшман?
Юнсăр пĕлĕш — ыйтсассăн та — тунĕ:

пур пуль ҫав тавҫӑрман йӑнӑш ман...
...Пӑр пӑсланӗ, кӑвар та шӑранӗ —
вӗткеленчӗк айван пулас мар:
сапӑрлатӗ-и айӑп шыравӗ?
Тен, ыррах ман сисчӳ? Пурӑнар!

## Тымарлӑ сӑмах, ҫунатлӑ сӑмах

Туйӑмсӑр, шухӑшсӑр шав — пушлӑх ҫилӗ...
Кӗвӗ чӗнсен те пиҫет ӑшӑмрах
пурнӑҫ тӗввиллӗ,
                    чунлӑх ӑшшиллӗ,
                              ӗмӗт ҫутиллӗ
тымарлӑ сӑмах.

Чӗм кӗртмесен, сӑмахсем хӑвӑл, вилӗ...
Чӗрт сӑввӑма, пул янравлӑ, сулмак,
ӗмӗр тӳпиллӗ,
                    вӑхӑт таппиллӗ,
                              чӑнлӑх хевтиллӗ
ҫунатлӑ сӑмах.

## Кунта эп кайкӑн-килкӗн мар...

Эй, чӑн самантӑм, тав сана, мухтав!
Пӗр евӗр мар эс — тӗслӗ, тимлӗ, тӗрлӗ...
Васкатӑн, васкататӑн — ҫук тӑхтав.
Нимрен илемлӗ эсӗ, чунлӑ, вӗрлӗ.
...Малаш-каяш теетпӗр шӳтлерех,
ҫапах малтан малах этемлӗх кайӗ —
ҫӗнелӗ, аталанӗ ӗмӗрех,
тен, пулӗ урӑхла хаклавӑн шайӗ...

Кашни çĕн ӳсĕм-ăрăвăн, пĕлен,
хăйле хавхи, шыравĕ, чун асапĕ...
Айван: «Сире çăмăлтарах»,— тесен,
чĕрре кĕрсе е хурлăн пуç усап-и?!
...Хĕвел сӳнмен, тĕнче пиртен писмен —
ӳсет тăван çĕрпе кунçул тивлечĕ.
Чун ырлăха туйсассăн, ăс пиçсен,
кунта эп килкĕн-кайкăн мар теесчĕ!..

* * *

Инçет — инçетрисен куç умĕ имĕш,
вĕсемшĕн куçăм умĕнчи — инçет.
«Чĕп куçĕ» тенĕ хăй çути — тен, пинмĕш! —
чи çутă çăлтăр пек хăш чух çиçет.

Пĕриншĕн вăл — чи ăшă кил çути,
çунса шырать ăна тепри — çулти...

* * *

Арласаччĕ кĕмĕл йĕкепе
çуркунне шап-шур пас мамăкне,
пир тĕрте пуçланă —
кам ятне
çĕлĕ-ши ытарайми кĕпе?
Тĕрĕлĕх сӳтет-ши кунĕпе
пурçăн çиппине хĕвел çăмхи?
Уява мĕнпур тĕнче хайхи
тăхăннă та хӳхĕм çĕн кĕпе!
Çакă çеç-и?
Кур: тăван енте

пурте капăр тумлă та чечен!
Çуркуннеçĕм — алăсти,
пĕччен
çак ĕçе туман пуль эсĕ те?
Акамна —
тĕр тĕрлекен хĕре —
çураççам, тархасшăн, ман валли.
Вăл—сан евĕрех ĕçчен,
хитре!
Çыпăçуллă,
ылтăн ун алли.

* * *

Таса, çуткам шур юр!
Епле утайăп
Çĕр çавракан тухсассăн куç умне?
Хĕвел —
Çуначĕ усăннă вут кайăк —
Çемçен пусма ларать пек ун çине.
Кăра çилсем кăпăшкалатнă мамăк
Йăварине хупласшăн сивĕре.
—Упрайăп-ши эп ыррăн е упраймăп,
Çуркуннепе тухас чĕпсем,
сире?!

* * *

Эп чипер çын пирки йăнăшман-и?
Е мана хурламан-и çынсем?
Хыçăмра калаçман-и тем-тем?
Тен, эп халь те такамăн тăшманĕ?..

Ансăртран пенĕ янă сăмах
çынсене те, мана та амантнă.
Тус тусне ыр туни асăмрах,
ыттине — алă сулнă та маннă.

* * *

Çиçĕм çиçет — çӳçĕм кĕрет
куç хупанки витĕр.
Шухăш таçта вĕçсе çӳрет,
чăлтăрр! татас та — вилтĕр...
Чи сывăххи сăнсăр иккен?!
Чи инçетри — хӳхĕм?..
Чи хаклине ак эс тиркен,
ют парасла хӳтлĕх...
...Кив шетнике тумла ӳкет —
анчĕ-шим лĕп çумăр?
Кĕрр! кĕрлесеччĕ ăшра ӳпкев —
çăтрăм имсĕр-сумсăр...

* * *

Ашри ачашлăх хывнă ĕмĕт çулĕ —
эрешлĕ çут кĕпер. Хĕм сирпĕтет ура.
Тĕнчен мĕнпур чи хаклă йышши чулĕ
юмахрилле çиçет, çунать умра.
Çук Илемпи!.. Ак ĕнтĕркетĕп унсăр
сап-сарă çутине сӳнтернĕ кил енче.
Пин-пин йĕппе перет,
чĕрет,
чикет чарусăр
ниме тăман вĕт вачăк кĕленче.

...Пăс пулчĕ — сӳнчĕ чи ачаш сăмахăм.
Кашти таран кĕрт хывнă кĕпере.
Таçта хыçа юлса çухалнă ахрăм
ан çаврăнтăрччĕ тăвăлпа пĕрле.

* * *

Çулăм сӳнчĕ, вутпуççи арканчĕ —
шăранать кăвар вĕрин-вĕрин.
Çăлтăр пуххилле хĕлхем вăркатчĕ —
çук ăшши шур ĕнчĕ евĕррин...
Çаруран кăвар çинче ташласчĕ —
кĕл те кăмрăк... Пăчă, вĕри мар.
Те асри çумра, те вутăш ларчĕ?
Кăмрăк амаланнă — шĕл-кăвар.
Пурпĕр сивĕ пек—шăнса кӳтес-и
ик чунран пĕри сивĕннĕрен?
Савăшу саманчĕ, кил! — кĕтеççĕ
вут чĕртсе сана. Кил çĕнĕрен!

* * *

«Вĕçсĕр çут тĕнче,
кил — тăван тавра.
Шухăшла инçе —
пурăн çывăхра»,—
тетчĕç, ăс парса,
ваттисем пире.
Çав халал аса
кĕчĕ ĕмĕре.

Чи хакли мĕнне
пĕлтĕм эп ĕçре —

27168-чув.
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

тав тăван ене,
çĕнелен çĕре!
Вĕççĕр çут тĕнче
чун çути тавра...
Шухăшлăп инçе —
пурнăп çывăхра.

* * *

Кĕрхи чечек çинчен чечек çине
пыл хурчĕ вĕçнĕ пек
куçран куçа вĕçет ăшри инкек,
тупас пек туссене...

Епле эс тĕмсĕлен ун пек чухне!
Çук-шим хута кĕрен?
Мĕлке пек хĕвĕшет иртен-çӳрен,
тăм тивнĕ пек чунне...

Сăмах пулман чĕнӳ кам чĕрине
хускаттăр ăнсăртран?
...Е хăй çути, е çăлтăрсем çине
ӳкет ӳпкевĕм ман.

* * *

Калаймастăп, татах калаймастăп
сăвă вĕççĕн калас тенине!
Чун енчи — чунри мар... Çуталмасть тăн
çиçтерсе тĕлĕнӳ шуçăмне.
Куçăм витĕр курать, шухăш çивĕч,
туйăмсем те хĕрӳ — хĕвелле.

Юрату иксĕлмесĕр ан сивĕт,
самана, эс мана — хӳтĕле.
Ăстăнпа, чун-чĕмпе куçайманшăн
пурнăçран хитререх сăмаха
асапланăп, йăлт тӳсĕп йăвашшăн,
урмăшса тухмасан ухмаха...
Сăвă çаврăмĕ явăнмĕ вĕçсĕр —
чиксĕр уçăмлăх сивĕ, кăра.
Калайман шухăш ахрăмăн вĕçтĕр
йĕркесем хушшинчи уçлăхра.

## Анне парни

Аннем, пӳрте эс тĕртнĕ паласа
саратăп — çиçтĕр асамат кĕперрĕн.
Тав уншăн, ылтăн алăллă чиперĕм,—
умри эреш вăратрĕ пуль аса...
Епле парне! Сăнатăп киленсе:
ăçтан çак тĕлĕнтермĕш, çак сăнарлăх?!
Ак ывăлун çуталнă килĕнче
юмах тĕнчи яр уçрĕ пек çĕн алăк.
Хура çинче,—
вăл çĕр — тăла кумми,—
савса тĕрленĕ авалхи элем-мĕн:
вучах, кил-çурт ĕлки, тӳпе пусми,
йăх пĕрлĕхин палли курнать илемлĕн.
Ак пурнăç йывăççи хĕвел енне
турат çумне турат хушса çĕкленнĕ.
Çӳлте куратăп Кайăк Хур Çулне...
Мĕн евĕр тупсăм! — килекен киленĕ.
Аннем, эс пурнăç панăччĕ мана,
халь — халăх чунĕн уççине сунатăн!
...Элем илемĕ вăй кĕртет чуна:
вăл ман хавха — поэзири çунатăм.

* * *

Çил кӳлсе сивӗ килчӗ.
Тӗтреленчӗ инçет.
Тус çулла чӗвӗлтиччӗ —
кӗр енне кӗвӗçет...

Ват йăмра каш! кашлать те —
хăмăр çулçă вӗçет.
Тус епле ачашлатчӗ! —
кӗвӗçет, кӗвӗçет...

Улшăну, ютшăну-ши
е çӗн туйăм пиçет?
Тӗкӗнме те хăрушă —
чӗвӗлти... кӗвӗçет.

* * *

Хӗрсе ӗçлетпӗр — ăнтăлатпăр
ырлăхалла та ырралла,
тӗнче тытас текен ют латсăр
юнать пулин те хурахла.

Çӗрле çук ыйхă — хурлă шухăш
вӗçет кӗрлевлӗ çӗр тавра.
Шăнать — пăрланнă пек — хăш чух ăш:
— Татах... тапранӗ-шим вара?!

Сасартăк — вăрçă хирӗ курнăн! —
хакла пуçлап çак чăнлăха:
тен, тин пуçланнă çутă кунăм
мӗнпурринчен хитре, паха?!

Çук пăр сивви — ӳсет ачашлăх:
пит хаклă пек умри, çумри.
Хитри илемлĕн, пурнăç чаплăн
курна пуçлать, шепрех ырри.

* * *

Пĕрре пурнатпăр пиллĕ тĕнчере,
пĕрре анчах,
пĕрре — ик ĕмĕр мар.
Юн сивĕнĕ, кăрт çурăлĕ чĕре —
унччен хыпса çунар, хĕрсе çунар.
Тасалăха — нимрен хакла хурса! —
хăюлăхпа хӳтĕлеме пĕлер.
Киревсĕрлĕх тӳрккессĕн ахăрса
ăша ан кĕтĕр — çирĕппĕн пӳлер.
Йăпанар мар çурма чăнлăхпала —
хистевлĕн пурнăç чăнлăхне уçар.
Чăмлак сăмах чĕлхе çыхланмалла
ан çăрăлайтăр — тӳррĕн калаçар!
Йăлт ĕлкĕрер — ачашшăн савăшма,
хаваслăн тĕлĕнме,
кĕтме чипер,
хавшанине хастаррăн вăй хушма,
сӳнсе сивĕннине çутар,
чĕртер.
Ĕненӳпе сывлатăр чун тĕнчи
хĕвеллĕ чăнлăх ăшшинче куллен —
тĕллев чĕм кĕртнĕ ĕмĕр çутинче
ĕçчен çынсем киленччĕр:
«Ак — илем!»

## Çутă кун, тĕттĕм каç

Кун каçа юратать, каç — куна,
килĕшет пĕри тепĕрне шет —
пĕрлешет, уйрăлать, илешет
çутă тĕттĕмлĕхпе: кур, сăна...
«Ку — трагеди!» — тесе тĕттĕмре
тĕмсĕлсе тертленеттĕм темччен.
«Ку — телей! — терĕм шуххăн пĕрре.—
Ăшă каç — чун евчийĕ иккен!..»
Парнелерĕ килес кун валли
çутă шанăç ирхи шурăмпуç.
Парнелетĕрччĕ каçăм валли
тутлă шанăç каçхи шурăмпуç!

* * *

Пиçет пилеш, пиçет палан—
кĕр хĕрелет хĕрле.
Вĕçевçĕ кайăксем паян
пухăнчĕç пĕрле.

Пире анчах, пире анчах
пит йывăр пĕрлешме.
Эс те ачаш, эп те ачаш —
хĕн-шим килĕшме?..

Те эс пĕччен, те эп пĕччен?
Тĕл пулас çук тепре.
Çурхи илем — хура кĕрччен,
тунсăх — ĕмĕре...

Пиçет пилеш, пиçет палан —
кĕр хĕрелет хĕрле.
Пĕрлешнĕ кайăксем паян
вĕçрĕç çӳлелле.

* * *

Сӑмах хакне кунҫул тивлечӗпе
шайланине кура
хуратӑп чӑнлӑхпа ырра тӗпе
кашни ҫӗн сӑввӑмра.

Ҫӑк йывӑрланнӑ пек ҫул иртнӗҫем—
пусать вӑл чӗрене.
Ҫапах та ӗҫсӗр самантсем кичем,
вӑрӑм кӗр енне.

Тирпейлӗх туйӑмра, шухӑшӑмра —
куҫать вӑл чӗлхене.
Ӗҫлетӗп килӗшӳ шыра-шыра,
пӗлсе илем мӗнне.

Вӑрттӑнлӑхне уҫсах пырать ӳнер*—
ӑслайӗ ун пин-пин.
Хавхаланар, ҫунар, ырра чӗнер,
асамлар эппин.

* * *

Капӑр ӑшлӑ ют килте
кив такан курсан,
ӑмсанаттӑм: «Ҫак тетте
манӑн та пулсан!..»

Пырӗччӗ чи авалхи —
тутӑхса кайни.
Юрӗччӗ хӑйле пахи —
йӗс пичет хывни.

* Ӳнер (ӗнер) — ӑсталӑх, ӗҫ мелӗ, искусство.

Алăкăм сулли ҫине
ҫапăттăм ăна —
ăраскалăн паллине
сăнĕччĕ хăна...

Тупнăччĕ пĕррехинче
тутăхманнинех—
шел, ҫухатрăм ҫул ҫинче...
Пит хитреччĕ, эх!

Кĕҫĕр — урама тухсан —
куртăм ун сăнне:
ылтăнланă ҫут такан
ҫакнă тӳпене.

## Чир

*Ачалăхри тусăма*

Ишĕлсе анчĕ мар-ши тĕнчем?
Пĕшкĕнен — тӳрленме хĕн пĕччен...

Пĕлĕт ҫӳллĕш капланчĕ асап—
тĕршĕнен, хуҫнă евĕр асат.

Асап мар, асат мар—ҫĕн ҫунат
сарăлса ӳснĕрен ӳт ҫунать...

* * *

Пĕр кун ҫеҫ пурăнтăм илемĕн
палăрăмне шыра-шыра —

янрарĕ вăхăт савăк çеммĕн,
сисмен те — эпĕ вуннăра.

Ик кун çеç пурăнтăм çут чăнлăх
хĕвелĕ май çўре-çўре,
савăшура пулмарăм тăлăх,
сисмен те — эпĕ çирĕмре.

Виç кун çеç пурăнтăм—ар пултăм.
Эй, тем те куртăм, тупата!
Чакса йăшмарĕ — ўсрĕ пултăк.
Сисмен те — эпĕ вăтăрта.

Сапать тăваттăмĕш кун ирĕ
чал кĕртекен сив шевлине.
Кĕр тунсăхне хĕрў ĕç сирĕ—
пурнар! Хушар чун шеплĕхне!

* * *

Тăван чĕлхерен
ан юстар-ха, кунçул,—
чунтан-чĕререн
каласси темĕн чул.

Тăван Çĕршывпа
калаçас хамăрла —
хавал пар, шăпа,
ан хуçсам кăмăла.

Тăван халăха
«Ĕмĕр пурăн!» тесе
пин хут калăп-ха,
пил курки çĕклесе.

Тăван чĕлхерен
ан юстар-ха, кунçул,—
чунтан-чĕререн
каласси темĕн чул.

Тăван аннепе
сăмаха вĕçлемен —
чи ăшă тимпе
«Чи ырри—эс!» темен.

Тăван аттене
тав туман арçынла —
салтак тăприне
шыраса тупмалла...

Тăван чĕлхерен
ан юстар-ха, кунçул,—
чунтан-чĕререн
каласси темĕн чул.

Çумра Илемпи—
чăн та, акăш ами!
Çунса вилĕп-и —
тем кали-калайми...

Хĕрарăм сăнне,
хĕр-пике илемне
курса тăранман,
мухтаса ывăнман.

Тăван чĕлхерен
ан юстар-ха, кунçул,—
чунтан-чĕререн
каласси темĕн чул.

Кĕтет тус-тăван —
вĕсемпе те ирччен

ларса калаçман
чун-чĕре каниччен.

Айван ик «тăшман»,
сар сĕтел хушшине
ларса, ыр сунман
юлташла пĕр-пĕрне.

Тăван чĕлхерен
ан юстар-ха, кунçул,—
чунтан-чĕререн
каласси темĕн чул.

Çӳлти, çĕр çинчи
курнăçасшăн манпа —
пур чĕрлĕх тĕнчи
калаçасшăн çынпа.

Тупа та туман,
«Сывă пул!» та темен,
мехел татăлман,
юррăма вĕçлемен...

Тăван чĕлхерен
ан юстар-ха, кунçул,—
чунтан-чĕререн
каласси темĕн чул.

* * *

Кĕтрĕм, кĕтрĕм—кĕтсе илеймерĕм...
Шанăç сӳнчĕ каçхи шуçăмла.
Тĕлленни тĕлкĕшет илепер пек
хумсенче хуçăла-хуçăла.

Хěрлě питлě мěлке мěкěл-мекěл
çулăм урлă сикет хěмленсе.
Кăвайтпа куçа-куçăн, тěлме-тěл
çунăпăр пěр-пěрне хěрхенсе.

* * *

Куллен-кунпа уявăн çěр пин сунăм:
суйи—суйланě, юлěç чăннисем.
Этем хавалěшěн хěрӳллěн çунтăм,
пуласлăх, ман ăшша хăвпа илсем?!
Чěкеç чěлхиллě халăхăм, хăюллăн
сăввăмсенче «Эс — вилěмсěр!» тесен,
ěнен мана: эп — кайăп, эсě — юлăн!
Суять-и çěр çыртса пеххиллекен?..

* * *

*Çарăмсан хěрарăмне*

Чапăр çеçкере.
Кăлкан кăваккăн
вěлкěшет вěри çил çамкинче.
Чакăр тӳпере ӳсет кăвар сăн
пěлěтпе пěркеннěçем тěнче.
Чанкăл аслати кěрлет — кăра вăл,
тěксěм тěс капланнăçем кăра.
Чăрсăррăн çěкленнě ик караппăл —
явăнать ик çӳллě çаврăмра!
Чалăшшăн —
пěр-пěринчен юлмасăр,
пěр-пěрин вăйне виçе-виçе —

чалкăшать тăват çунат сулмаклăн
чаплă юрату вĕçевĕнче.

* * *

Кӳренчĕк — куççăр, кĕвĕç ĕçĕ — кĕвсĕр,
яр-уçă чунлă çын çех таравать,—
çакна ăнланнăçем ĕç ăнĕ — кĕтĕр:
тин пухăнать пек сăмаха хăват.
Чунри—чунсемшĕн,
шухăш—вичкĕн ăсшăн,
йăпантăр тĕлĕкпе тĕлĕрекен...
Е хурланатăп, е кулатăп ăшшăн —
сивлек сăмах̧ анчах тĕлсĕр иккен.
...Ан тив, çунтартăр самана хĕрхевсĕр—
телейлĕ пулăп сăввăмсем куллен
çăкăр-тăвар,
сим пыл,
кĕрнеклĕх евĕр
тăван чăваш кĕрекине кĕрсен.

* * *

*Н. Е-на*

Асамат кĕперĕ — йӳнчĕк,
тăван ен — сăпкам.
Йӳтĕм çук,—чĕрем, ан йӳçĕх,
хур тумасть никам.
Сăрт тăрри çерем кăп-кăпăш,
çеп-çемçе хавтан —
вырт та месерле, пул кăтăш,
тăр та ут... Аван!

Ăншăрт курăкĕ, шур çеçпĕл,
тĕкĕлтурасем.
Кăмăл уçă, кăмăл çепĕç:
тĕмсĕл — курăн тем...
Аслати те кăлтăрт-кăлтăрт
авăран арман.
Юншăхма-и? — çук пĕр кăлтăк...
Çак çĕр — ырлăх ман.
Çиçĕмсем таçта йăлт сӳнчĕç.
Лĕм-лĕм çил çуткам.
Асамат кĕперĕ — йӳнчĕк,
тăван ен — сăпкам.

* * *

Çепĕçлĕхпе çирĕплĕхе типтерлĕн
упра пĕлменшĕн тавăрсан шăпам,
ăшри,
чун-чĕремри йӳтетмĕш эрлĕк,
тасалăх çутинче сӳнсе шăплан.
Санпа пĕрле йăнăшăмсем тĕп пулччăр!
...Ачашлăха сив сăмахпа вĕтсен,
кулюккалла кăвăлтатса эп —
путсĕр —
каям чечекленӳ уявĕнчен.

* * *

Пиллĕхлĕ тĕнчем,
асилтер — тĕпчем:
юлман-и пĕччен,
пулман-и кичем,

кӑмӑлӑм—черчен,
илемӳ—чечен
тарават кунччен,
паянхи кунччен?

Эп сутман чуна,
пытарман чӑна
е юна-юна
ылханман ҫынна —
ҫавӑнпа, хӑна,
кӑмӑллап сана —
чи хитре куна,
паянхи куна.

Чӗрempe, чунпа,
ӑстӑнпа, юнпа,
пиллӗ шӑпампа,
сӑввӑм-юррӑмпа,
манӑҫми сӑнпа
пӗтӗҫрӗм санпа —
чи хӗрӳ кунпа,
паянхи кунпа.

Тус ӳкмен куҫран —
юратать, куран.
Чи хакли умран
татӑлми — упрам.
Эй, мӗнле кайран
уйрӑлӑп санран —
ӑнӑҫлӑ кунран,
савнӑҫлӑ кунран?!

## Тĕкел йĕрке — мăшăр çунат

Сар мăшăр çунатна, тĕкел йĕркеллĕ сăввăм,—
Вĕç шурă хут çинчен çĕмрен пек вĕршĕн сăнлăн.

Аста ик хĕлĕхпех хывать пин саслă çемĕ.
Тĕкел йĕркемсенче — кунçул сасси, илемĕ.

Çут тĕнчепе этем — тулти, шалти ик уçлăх —
Пĕрлешрĕç сăввăмра: пур килĕшӳ, пур туслăх.

Ик вĕçсĕрлĕх — ик енлĕ тĕкĕрте:
Мĕнпур енче — тĕнче; ăс, чун тĕнчи — пирте.

Куран, илтен, туян — аслăланать тавралăх.
Илем тĕнчи чĕнет — яр-уçă аслă алăк.

Ик алă чăмăртанчĕ — ик шăпа йĕрри
Пĕрлешрĕ те пулайрĕ ăраскал тĕрри!

«Хĕн-хур» теекене ырлăхалла чĕнетпĕр —
хур курас мар тесе, хĕнне пĕрле çĕнетпĕр.

Хирте çын сухаланă тĕкел хура йăран,
Çӳлте — Хуркайăк Çулĕ: вĕсен мĕлки, куран...

Вĕçет куçран куçа ик çутă пайăрки —
Çĕн шухăш-туйăмсен сăвăланан йĕрки.

Ик пĕрлешми йĕрке — кунçул çырмин ик енĕ,
Мăнаçлă юхăмра, тен, сассăм кĕвĕленĕ...

* * *

«Чăваш айван, ялан ыр ятлă
пуласшăн кӳршĕ-аршăпа»,—
тесе кам йĕкĕлтĕ е ятлĕ
пире халь? — каласам, шăпа.

...Эй, халăх! Çул пулман-иç янтă —
эс мĕн кăна курман, тӳсмен!..
Анчах та никама — нихçан та! —
пусмăрламан, пăвман, хĕсмен.

Хăвна «Пĕт!» тенĕ, вилĕм суннă,
пусарнă сывлăш тухмиччен,
хĕр-йĕкĕтне вăрланă, сутнă,
йăхна салатнă: «Ан ĕрчен!..»

Эй, мĕн калас! Йăваш пек халăх
чунне сăпайлăн уçнă чух,
çапах эпир пĕр кун, пĕр талăк
чура пулман, пулас та çук!

Пурнатпăр тăнăçлă, хăр-харсăр —
çут ĕмĕт те, ыр ят та пур.
Салтак чухне хăюллă, харсăр,
ĕçре чухне ĕçчен, маттур.

Утатпăр малалла — çул аслă.
Сӳнми хавал, телей сунса,
çур миллиард пĕрлешнĕ алă
ыр сунчĕ: «Пурнăр, пĕр пулса!»

# СЎНМИ ВУТ-ÇУЛĂМ

*Сăвăсем*
*Микропоэмăсем*

* * *

Çулăмланчĕ ĕмĕр кĕркунни —
кун хĕрў, каç канăçсăр та вăрăм.
Кăмăла пусарнăшăн тав, ăрăм:
чĕр илемсĕр мар-мĕн куç курни.
Самана ĕшенчĕкĕ пире
тепĕр чух авма пăхать хĕрхевсĕр,
кĕрешме ан юлтăр, тенĕн, хевтĕр,—
ĕненетпĕр тухасса тўрре.
Ĕненетпĕр!
Савнăçпа ырра
хаклама вĕреннĕçем чун çирĕп.
Тĕтрене çил сирнĕ евĕр сирĕп
ĕмĕр тунсăхне çавна кура.

* * *

Пурнăç ирĕ... Чĕнўллĕ пуласлăх.
Ĕмĕт сутă — ырра çеç ăмсан.
Шуçăмла уçăлать аслă алăк,
эс тăван çĕр çинче йĕр хывсан.

...Вăрçă терчĕ. Пĕрремĕш йăранăм
пурнăç çулĕн пуçламăшĕ, тен?
Çĕр-анне—ар йышне çĕн вăй панăн—
ачаллах улăп тунă пиртен.

* * *

Сасартăк ар çулне эп çитрĕм—
Ак, аттерен те аслăрах...
Ак, хурлăх çулăхать.
«Пул çирĕп!»—
Чуна ăс йăпатать вăрах.
Епле лăпланăн?! Кам вăй патăр
Салтак умне тăма паян?
Çĕршывăмшăн пуç хунă паттăр
Тем тимлĕн ыйтнине туян.
Ăшталанма пит пысăк айăп
Ман çук та — пурпĕр, пурпĕрех
Епле вĕри куçна тартайăн,
Вилĕмсĕрри пăхсан тӳрех?
Мĕнпе мухтанăп? — пулмĕ ĕçĕм
Ун паттăрлăхĕпе пĕр тан.
Вăтанăп, пăшăрханăп вĕçĕм
Йӳтетмĕш йăнăшсем пуртан.
Анчах тупа туса хистевсĕр
Эп калăп аттене: «Ĕнен,
Çĕршывшăн çапăçăп сан евĕр,
Пуçа та хурăп, вăл чĕнсен!»

* * *

Пĕлĕтсем ерипен каплансассăн,
малтанхи аслати пурпĕрех
ăнсăртран — çӳл тăва катнă саслăн —
кĕрслетет те хăпать пек сехрем.
Те çынсен ирĕкне пăхăнманшăн,
те пăлхавлă вăйпа аснăран
çуратать вăл пирте пăшăрханăç,
сиплĕ çумăр çитсен те кайран.

Тăвăр,
тексĕм тӳпе хупăрланнă,—
пĕлĕт ĕнĕхнĕ.
Çумăр лӳшкет.
Çут тĕнче пĕтессе хыпарланăн
каркăç çиçĕм çĕрпе сĕкĕшет.
...Самантран сирĕлет вут синкерлĕх.
Çичĕ тĕслĕ çӳхе витĕпе
пĕркенет те тавралăх сенкеррĕн —
уçăлса тăрăлать тӳпе.
Пуç çинчех кĕмсĕртетнĕ хăрушлăх,
тен, нихçан та пулман тĕнчере?
Çутă канăç. Ем-ешĕл хир, улăх.
Кăмăл уçă. Хăпмасть сехре.

* * *

Çут кĕреке. Сĕтел. Минтерлĕ пуш пукан.
Анне те эп. Ачам — салтак мăнукĕ.
Тав куркине тытса, тӳсĕмлĕхе пухан —
атте ятне йӳççи тумлам-тумламăн ӳкĕ...
Тост çĕклеме черет — епле сăмах тупас?! —
хĕрхӳ ӳпкев таппи пит шăнăрне пĕртернĕ.
Куç хупанçи пулса — арçын та, мĕн тăвас? —
пытарăп куççуле: такам — хавас, эп — тертлĕ...
Миçемĕш çул çапла,
çапла — миçемĕш çул! —
çак аслă уява кĕтсе илетпĕр акă
килте, йышпа пĕрле... Çаплах темле сив чул
пусать пек чĕрене — мĕскер сирсе пăрахĕ?!
Минтерлĕ пуш пукан анне çумĕнчерен
чи чаплă уявсем те пумилкке манерлĕ...
«Тав, аслă Çĕнтерӳ!» тесе тӳнккет чĕрем —
çурма хавас-
çурма салху шăпа, ман эрлĕк.

## Вăхăт

*Ытарайми Владимир*
*тусăма асăнса*

Пĕр тикĕс тӳнккеймест ялан хĕрӳ чĕре,
таппи хăвăртланать те тапхăр-тапхăр
хăрушă чир пăвма пăхать пире —
эпир çаплах ĕçлетпĕр, юрататпăр.
Васкатпăр, тилмĕрсе малашлăх ырлăхне,—
кунсем иртсе пыраççĕ шутсăр хăвăрт.
Хăш чух тӳсме хĕн ĕмĕр пусăмне —
е сывлăш пӳлĕнет,
е кăкăр — тăвăр...
Çĕршыв куранчĕсен хавас янравĕпе,
çĕр чăмăрĕн çаврăнăшпе ĕнернĕн
чĕре кунçул халне туйма пуçлать ирпе —
эппин, мĕнпур йывăрлăха çĕнтерĕн.
Пĕр пуш самант та çук — кашни çăра,
т у л л и:
сулăмланать çеккунт, минут, сехет, çулталăк.
Хастар, ăста çынсен хавалĕпе алли
пуласлăх кĕперне хывать, уçса çут алăк.
Çеккунт — çĕн тракторсен аслатилле сасси.
Минут — миçе çĕн çурт çĕкленнĕ, хатĕр!
Сехет — янрать çĕн чугун çулăн çĕн касси.
Çулталăк — ӳснĕ вăй та ырлăх-катĕр.
Епле масштаб!
Кам сивĕ кăмăлпа
хăт канлĕхне тарса халь намăс куртăр?!
Ӳнерлĕ,
вăйлă алăри шăпа
телейсĕр пулмасса пĕлетĕр пурсăр.
Вĕç, лăпкăлăх ыйхи!
Тап вăйлăнрах, чĕре!
Тĕллев кати чĕнӳллĕ, аслă, вĕçсĕр.
Çĕнелекен Тăван Çĕршывăмăр пире

хире, цеха чёнет — кам ларё ёçсёр?!
Сая ярас килмест пёр тăнăçлă куна —
вăл çён çитёнӳпе ёмётрине çывхарттăр.
Хăратё-и пире тăшман юна-юна?!
Ёçре пиçёхнисем ялан хăюллă, харсăр.
«Паян кая юлни — ыран тухсам мала!»
тенин пёлтерёшне ăнлантăмăр пит анлăн.
Ялавăмăр куçса пырать алран алла —
чи малтанхи ретре,
варр варкăшса çунатлăн.
Тăнлать, сăнать этемлёх Ленин çёршывне
ёмётленсе,
шанса,
тăшман — шăлне çиет-тёр...
Ёçлер!
Мухтавлă паттăрсен çулне
чи çутă ёмёт магистралё
теччёр.

# Çĕршывăм, эс—çĕнĕлĕх амăш

*Микропоэма*

1. Çĕршывăм, эс — çĕнĕлĕх амăш,
эп унăн сăпай юрăçи.
Илтеп: «Аслă стройка пуçламăш.
Йышне хутшăнма юрĕ-ши?..»
Пĕрремĕш шалча çапнă хатăр —
эп мар пуçаруçă, мĕн-ма?!
Сÿнмен-ши, юлман-ши эп халсăр?
Тем намăс сăнавçă пулма.
Е чаплă ĕçе пуçăнман-и
эп чи малтанхи ăстрăмра?
Хĕрÿ çулсене кам-ха манĕ?
Иртни — чĕремре, асăмра.

2. Çĕршыв, тин вăраннă хевтеллĕ
тухан ир-ирех куç умне,
тĕнчен вут çеçке пек хĕвелĕ
хитрен пĕрĕхсен шуçăмне.
Умра уçăлать çутă анлăх —
васкатăп курса çÿреме.
Манпа тăванланнă тавралăх:
«Савсам,— тет,— сÿнми илеме!»
Савмасăр! Çĕнетнĕ-çке эпĕ
ĕçчен туссемпе çак çĕре.
Яла, хулана халь кĕреп-и—
сикет хĕпĕртевлĕн чĕре.
Татах ăмсануллăн сăнатăп

тахçан эрешленĕ çурта.
Эй, çамрăклăх! Сирмĕ çунатăм
сана — юлнă шуçăм çутта.

3. Хула, заводсем, çĕнĕ тинĕс,
мăнаçлă та капăр пейзаж
хитрен сăнланма чăн та тивĕç—
ӳкертĕр художник юлташ.
Мана та илемлĕх тулашĕн
капмарлăхĕ илĕртмен мар.
Халь çын кăмăлне эп туясшăн—
тупасшăн кĕрнеклĕ сăнар.
Хавха тĕлпулусăр куçлаймăн
шăпин çăлтăрла самантне.
Кунта унăн çутă пуçламăш.
Уçас космосне — шалтине!
Нихçан чун тĕнчи ан сĕмлентĕр,
килсен те хăш чух йывăра.
Ĕçчен ĕмĕр-ĕмĕр ĕнентĕр
хĕвел ăшши евĕр ырра.

4. Çыртарчĕ пире биографи
хитре çĕнелӳ самани.
Çукрах-и патварлăх, пурах-и—
ăнланĕ усал сунманни...
Ĕçре тĕрĕслерĕ ман ӳсĕм
халне, хавалне, тивĕçне.
Ĕçре хĕрнĕскер, чакмĕ тӳсĕм
кунçул сăвăланнă чухне.
Ӳссе, пиçĕхсе çирĕпленнĕ,
пĕлетпĕр савма, савăнма.
Кĕрет савăк вăхăт илемĕ
чĕрем хывакан сăввăма.
Вăл — çĕн эпопея пуçламăш.

Пул тухăçлă, вĕçсĕр ĕççи!
Çĕршывăм, эс — ç ĕ н ĕ л ĕ х
а м ă ш,
эп унăн сăпай юрăçи.

* * *

Каçĕ! Ăшă та шăв-шавсăр—
çумăр, варкăш çук.
Ывăнмасăр, такăнмасăр
çул пиллет куккук.

Асăмрах тытаттăм лайăх,
мантăм — темĕн чул?
Ма сунан мана, ыр кайăк,
шутсăр-сумсăр çул?

Ăраскал пӳрни те çитĕ —
ытлашши мĕне?
Сассуна ытти çын илтĕ,
çĕклĕ кăмăлне.

Юратмалăх, юп тумалăх
хал та, чун та пур.
Ян! та ян! янрать йăмралăх,
шăранать шыв-шур.

Чĕлтĕр-чĕлтĕр çутă çулçă
хӳттинчен, çӳлтен,
вĕçĕмсĕр — сассу пит уçă!—
темĕн евитлен...

Вут çути сӳнсе ларсассăн,
инçетри каçсем,

ăрăмçă куккукăм, сансăр
пулĕччĕç кичем.

Никамран, нимрен ан ютшăн
çепĕç чĕрӳпе —
çĕр çинчи пур чĕрĕ чуншăн
авăт çĕрĕпе.

Çын-и, курăк-и—сатуррăн
шутсăр çул пилле.
Ху та ĕмĕр-ĕмĕр пурăн
вĕсемпе пĕрле.

## Тăвăлта

*Халăх поэтне*

Мĕнпур тĕнчен, саманасен хӳхлевĕ
кĕленчене чĕрет, шаккать тулта —
епле, епле поэт ăна итлейĕ
пăрланнă кантăк витĕр тăвăлта?!
— Тупсамччĕ, тусăм, кĕрĕк, кив çăматă.
Туратлă уртăш туяна пар-ха!
Ак — ямшăк пиçиххийĕ. Пуçăма та
хуплас пуль — туп хăлхасăр калпака!..

Паттăрланать поэт — ăшри ӳпкевĕ
тухмасть чи йывăр чух та çиеле:
чăт, сывлăш пӳлĕнсен,— хура ӳпкеллĕ
пулсан та çунмалла, кĕрешмелле.
Тип шăпăр хăмпинчен те кăкăр пушă—
пăчланнă пек ытарайми тĕнче.
Ут — хăрăк вĕркĕч ĕçлемест... Хăрушă.
Пĕртен-пĕр шанăç — чун хавалĕнче.

Чим, хăш енчен вĕрет тĕнчемĕр çилĕ?
Çавăрăнса тăрас шăп хирĕçле.
Ăша ťапса тулсамччĕ, тăвăл пилĕ! —
эй, кăкăрăм, хаш-хаш туса ĕçле!
Утать поэт — юр сăрнă пĕвĕ çӳллĕ,
утать шап-шурă аслă урамра:
уй-хирелле, ирĕкелле ун çулĕ —
унта асать чăн тăвăл. Вăй — унра.

Епле аван! Епле çанталăк ырă!
Кĕр, кĕртсене аша-аша, шала —
хура вăрманалла. Туртать пек пырĕ
поэтăн тăвăл панă хавала.
Эппин, иркӳлĕм хывăнĕ çĕн сăвă:
кĕвĕленме пуçларĕ вăл — тимле.
Мĕн чухлĕ каласси! Шăпа-и сăвĕ
кĕскелнĕ кунсене!.. Ĕçлемелле!

Тав, тăвăл! Халь — рехетленсен те юрĕ:
ăшри вучах тивет — хĕртер сасса.
Эй, вĕркĕч, вĕр! Пуçлар кĕрлевлĕ юрă,
хура юманпала ыталанса.

* * *

Çуллă, сиплĕ, ăшă çумăр çунă.
Асамат кĕперĕ ăсанать.
Çутçанталăк чунĕпе çын чунĕ
хĕпĕртевлĕн савăшнă самант.
Евĕклĕх.
Тăванлăх.
Çураçулăх.
Çывăххи татах та çывăхрах.
Çутă пайăрки пек çуран çулăн

юппинче ҫунса тăран вăрах...
Ҫухатассине ҫухатнă — маннă.
Тĕлĕнтермĕшне тупайăп-ши?
Ҫичĕ тĕслĕ кĕперпе-и анĕ
ман пата килес кунсен ăшши?
Тĕмсĕлсе кĕтни ҫукран ачашлĕ
ҫулҫă ҫеҫ питрен, ĕне-ĕне...
Ăҫталла тата ҫилсен чаш-чашĕ
чашкăрса хăвалĕ кĕр енне?

* * *

Чĕрем, хăҫан сан еккӳне чухлайăп?
Ăс-хакăл — тăп, эс — тем сиссе—
кĕрлен...
Хӳтевсĕр пулнинче-ши ку чух айăп?
Тархасшăн лăплансам—ан сехĕрлен.
Е иксĕлми-и артаку? Мăнтарăн!
Чакар, сӳнтер хĕрӳлĕхне пăртак.
Юратăвăн шĕл-кăварне тустартăн,
хавасланасчĕ — ютшăнатпăр ак...
Пĕрре шăнса кӳтес пек пĕрĕнетĕн,
тепре шарт ҫурăлас пек сарăлан.
Асап сăлтавĕ санра мар — ăнлан:
сив шухăшсен тамăкĕнче ĕнетĕп...

## Шупашкар ҫăлкуҫĕ

Шарлак шăнкăрмисĕр ял чĕмсĕр—
вырнаҫнă чăваш варсенче...
Тапать пĕр ҫăлкуҫ чĕмпĕл-чĕмпĕл
тăван Шупашкар варринче.

Вăл мар-ши кунти чи пĕрремĕш
çурт хывнă çынсен кăмăлне
туртса илентернĕ? Пĕлеймĕн —
туйма хĕн аваллăх мĕнне...

Тен, пур чăннипе уйрăм техĕм
тăп-тăрă çăлкуç шывĕнче?
Виç алтăр ĕçсессĕн те эххĕм
тумастăн-çке хĕл сиввинче.

Тапать-ха çăлкуç, шавлă ĕмĕр
хакла пĕлмесен те сипне.
Таçта та кĕрлев, кĕмсĕр-кĕмсĕр —
чĕр юхăм юлмасть-ши хĕне?!

Çĕклер, тăвансем, пĕр канашлăн
кунта юмахла сар пура!
Хуламăр çыннишĕн, хăнашăн
курка та лартар: туй ырра!

Аванччĕ!.. Халь мĕскĕнĕн, чĕмсĕр
шăвать сулхăн каç вар енче.
Тапать чĕр çăлкуç чĕмпĕл-чĕмпĕл
тăван Шупашкар варринче.

## Яшлăх паркĕпе сывпуллашни

Кивĕ парк. Ансăр тӳрĕ аллея.
Кăпăш юр. Кăпăк паслă турат.
— Тĕлĕнтермĕш пек сăнлăх!
— Хĕлле-и?
— Юмаха кĕрер мар-и?
— Юрать!..

Шурă тĕс хурипе килĕшÿллĕ —
хÿхĕм графика! Чĕнтĕр чечен!
Çутçанталăк ÿнерĕ пит çÿллĕ,
тĕлĕнер ун тасалăхĕнчен.

«Парк тĕтри тунсăхран питĕ сиплĕ...» —
тесшĕн эпĕ тепре тусăма,
тем чĕлхе çаврăнмасть... Кун сив çиллĕ.
Пас пуçлать ерипен тăкăнма.

...Асăмра — чăштăр-чăштăр сар çулçă
кĕвĕ май çаврăнни... кивĕ вальс...
Вĕçсĕрункă е вирлĕ, е сулчă—
эп те, эс те хăюллă, хавас.

Темĕнле чăрсăр туйăм çуначĕ
вĕçертесшĕн сана аллăмран —
ĕмĕр-ĕмĕр ман ывăнас марччĕ,
тухас марччĕ асамлă хумран!..

...Тепĕр хут капăр сăнлăн,
шăй-шайлăн
тухмĕ ансăр аллея ума:
тинĕс авăрĕ пулчĕ çав айлăм,
каснă йывăç пуçлать тайăлма...

Тинĕс тĕкĕрĕ тĕреллĕ, паслă —
пăр ÿкерчĕк-ши парк вĕрени?
Эй, ăçта пĕр чечеклĕ ик алă
пуçласа ăнланма вĕренни?!

* * *

Тинĕс, çĕнĕ тинĕс,
кĕрр! кĕрле хаваслăн —

вăхăт вăй-хăвачĕ çӳллĕ хумсенче.
Паттăррăн çĕклентĕн çутă сăнлăн тин эс—
ир те каç ӳсетĕн, ейĕвӳ инçе.

Тинĕс, çĕнĕ тинĕс —
аслă, çутă ĕмĕт
пĕрлештернĕ халăх тунă ĕç парни —
Шур хула енне çывхартăн та пĕр тикĕс
тек чăмпăлтататăн — çул шыратăн-и?

Тинĕс, çĕнĕ тинĕс,
ирĕклĕн, хăюллăн
кĕр Шупашкара—çĕн кĕперсем айне!
Сан хуçу пулма ман харсăр халăх тивĕç—
хевтӳпе тата çĕнетĕ çĕршывне.

Тинĕс, çĕнĕ тинĕс,
чĕрĕ тĕкĕр евĕр
çутă пĕрĕхетĕн кантăксем енне.
Çӳллĕ çырантан сана сăнать пек тимлĕн
Çеçпĕл, каласа кĕрлевлĕ сăввине.

## Ĕçлĕ Атăл

### 1

Кам чунне яр уçмасăр çӳрейĕ,
Атăл, эсĕ чĕнсен хăв патна?
Ĕç çемми хиврелетнĕ хорей-и
тивĕç сан вĕрекен хăватна?
Çут сăну кăмăла хăпартатчĕ —
вĕçнĕ, виркĕннĕ пур чух ерçӳ
çӳллĕ хум ытамне эп, яш каччă,
халь тĕллевĕм — сан аслă ĕçӳ.

Канăç харсăршăн мар,
çавăнпа-и
саманта та ямастăп екке:
ăс та, чун та ĕçре. Ăвăн — кайĕ
çуталса ик çунатлă йĕрке.

2

Хум хум хыççăн шăвать,
çĕн йĕрке те
сӳнмĕ — куçĕ янравлă сăвва.
Тен, ăна хăй килне ăшшăн кĕртĕ
тус-ĕçчен, тухнăскер мухтава.
Атăл, эсĕ ăна та, мана та
ывăл тенĕн туйнать аттелле:
вăл пĕве пĕвелет, эп мăн атă
тăхăнап таваскап çав тĕле.
Тек тĕпчеп, летописец манерлĕ,
ĕçлĕ кунăн кашни хыпарне —
кăмăл-туййăм хевти, ăстăн мелĕ
çул çутаççĕ ĕçчен çын патне.

3

Атăл, вăхăт сана çĕн сăн кӳчĕ,
тарăнлатрĕ çап-çутă çулна.
Тăрр! чĕтрет те пĕвен нăкă ӳчĕ
ток вăйне парнелет пек çынна.
Юхăм-хум чăмăртаннă, пĕрлешнĕ
тăнăç пурнăç хăвачĕ пулма.
Шывсиккин аслатиллĕ кĕрлевĕ
хатĕр чаплă кĕвве хывăнма.

4

Аслă Атăл — ўркевсĕр ĕçлевçĕ,
эс ман халăхшăн ĕмĕр атте.
Шанăç вăйĕ, хастарлăх — пĕлесчĕ! —
пур-ши чăн-чăннипе халь пирте?
Пур! — çĕнелĕвĕн чаплă сăнарĕ.
Пур! — кĕрлет таврара, хум çинче.
Пур!—тин çутнă пин-пин çăлтăр мар-и?
Пур! тени ĕçченсен куçĕнче.
Пур! текен тупалла сăввăм пурччĕ,
халал капсулĕпе никĕсе
тус ăна вăхăт пилĕ пек хучĕ:
пин çултан тăхăм вулĕ, тесе.

* * *

Таçти ют çĕр мар хăнана килнĕ вырăн —
сăрт-туллă илемĕ çĕклет кăмăла.
Канасчĕ,
пурнасчĕ те тунсăхсăр,
ыррăн —
чĕре чан çапать: киле каймалла!

Çунса,
пăлханса,—
вăй çитмессĕн вĕçевлĕх,—
тăван енелле ăнтăлатăн вара.
...Ура — Атăлта.
Улăп сăрчĕ — пуçелĕк.
Çĕрпе шыв таппи чĕм кĕртет кăкăра.

* * *

Тӗлпулу е уйрӑлу вокзалӗ —
савнӑҫпа салхулӑх юнашар.
Хӗвӗшетпӗр, тухнӑ пек пушар,—
е тӑсатпӑр, е сулатпӑр алӑ...

Чӗкеҫле чӗвӗлтететтӗм пулӗ
кӑмӑл туртнине кӗтсе илсен,
халь — чӗнмесӗр — сивӗнен, писен
чи ҫывӑххинчен: кашнин хӑй ҫулӗ...

...Ҫӗрлехи вокзал. Саксем пуш-пушӑ.
Кӑмрӑк тӗлкӗшсен те ӑшӑ мар.
Ӑсатмарӗҫ. Кӗтмӗҫ, тен... Хӑрушӑ.
Хура шар манпа халь юнашар.

* * *

Вӗҫсӗр-хӗрсӗр, тарӑн океан,
пурпӗр ун шывне — тӑварлӑран —
йӗкӗр ывӑҫпа ӑсса ӗҫеймӗн.

Пусӑ куҫӗ тӗкӗрпе пӗр тан,
ун шывне — сипетлӗ нӳс пуртан —
ӗмӗр ӗҫӗн те: «Тӑварлӑ!» — темӗн.

Чӑнлӑх та, сӑмах та — чун валли,
пур нимрен тутли, пур тӑварли.

* * *

Урать урам — у-у! у-у! улу.
Уй урлӑ уй та курӑнмасть: каҫ шурӑ.

Чĕре чулне çапать, чаккать çулу.
Юр вĕтелет куçа... Шăлас — кăшт курĕ.
Тăван ялта хваттер шырамалла...
Хăш хапхана шаккас? Анчах — тем вăрчĕ...
Тухса каяс пулать-шим каялла?!
Атте çуртне тупаймăн — ишнĕ вăрçă.
Шак! шаккасан — паллах, кашни çурта
ялйышăм кĕртĕ те, хăна та тăвĕ.
...Ачалăхри чи тунсăхлă çутта
шыра-шыра ăшра çунтарăп сăвă.

# ÇĂЛТĂРЛĂ ÇУРТСЕМ

*Микропоэма*

1

Кашни яла халь пуç тайса кĕретĕп,
пĕрех — вăтам-и, пĕчĕк-и вĕсем:
урамсенче — таçта та — ретĕн-ретĕн
лараççĕ хĕрлĕ çăлтăрлă çуртсем.
Сайра, çапах тĕл пулкалать-ха кивĕ,
хуралнă улăм тăрăллă пӳрт-çурт:
паллах, пĕччен пуç тăлăх арăм килĕ,
паллах, кунта арçын артакĕ çук...
Паллах, ача-пăча çапать хастаррăн
сăрланă çăлтăр пĕрене пуçне.
Эй, пĕрени! Пин пĕрĕм, çурăк-çаврăм:
кур вăхăт эрешменĕсен ĕçне...

2

...Пӳртсем, çуртсем: пĕрин çинче —
пĕр çăлтăр,
икшер-виçшер — хăшпĕрисем çинче.
Пур çиччĕлли... Епле, епле çын чăттăр
йĕмесĕр, шăл çыртмасăр умĕнче?!
Курнать те хапхара кĕрченĕ карчăк:
«Мĕнле тӳссе ирттернĕ?!» — хаш сывлан.
Ăна чĕнет ача, пике е каччă:
«Тĕпрен хăрман...» — йăпаннă пек пулан.
Ĕçре хресчен — çемьеллĕ-и, пĕччен-и,—
пурнать, сӳнмен вут-тĕтĕм çуртĕнче.

Кӗрлет ҫӗн туй, юрлать сăпка чепченӗ —
ӳсет ҫӗн шанăҫ ҫăлтăр хӳттинче.

3

«Манмастпăр! Никама та! Нихăҫан та!» —
пуҫ хунисем ассенчине кура,
ача-пăча, яш-кӗрӗм, ар хуҫа та
тупа тăвать халь ҫăлтăрлă ҫуртра.
Тупа тăвать: «Ёнен, Тăван Ҫӗршывăм,
ҫут ҫăлтăр пулнă паттăрсем чӗнсен,
хастаррăн хӳтӗлӗ арҫын, хӗр, ывăл
сан ирӗкне тумлам юн юлмиччен!»

* * *

Ҫук, амаҫури мар,
эс — тăван Ҫӗр-анне.
Чи илемлӗ сăнар
тухрӗ куҫăм умне.

Ҫур енне, кӗркунне
е ҫулла, е хӗлле
эс — тăван Ҫӗр-анне,
капăр ҫамрăк хӗрле.

Эп санран хăш чухне
писнӗ, ҫул ҫӳресе,—
эс — тăван Ҫӗр-анне,
тавăрман кӳренсе.

Ак шур Атăл хӗрне
ăшшăн чӗнтӗн татах—

эй, тăван Çĕр-анне,
кăмăл уçă, тавах!

Çӳл çӳçӳ сулхăнне
кĕртрĕн эс кĕр енне,
эй, анне, Çĕр-анне,
ывăлна, сар хĕрне...

Çĕн пĕве шарлакне
кимĕ талпăннă май
эс — тăван Çĕр-анне,
шухăш хушрăн нумай.

Мĕн каласшăн тата
эс — анне, Çĕр-анне,
хĕрлĕ сăнлă ката
çутнă май çăлтăрне?

## Илемпи юрри

Хĕвелтен савни пулса
ĕнтрĕк хӳттипе килетĕн,
сĕм çĕрле киле кĕретĕн,
çупăрлан йăл-йăл кулса.

Сӳнтерсе çăлтăрсене,
шуçăм шевлипе каятăн,
сар хĕвел пулан та ялтăр
çĕкленен сăрт тăррине.

Кунăм çутă,
каç вĕри —
эп телейсĕр евĕр-и?!

## Ӑсталӑх

*Цехри ӳкерчӗк*

Тин ҫеҫ кӑвӑлтататчӗ кӑвакарчӑн
цех виткӗчин сенкер сулхӑнӗнче,
хускалчӗ те катмар станокӗ каччӑн —
ҫуралчӗ урӑх сас вут-хӗм енче.
Умра — фонограф-тӗлӗнтермӗш тейӗн:
кур — каскӑч алмазпа ҫине-ҫине
сап-сар йӗс ҫаврине чӗрсе тирпейлӗн
ҫырать пек чи хӗрӳ ӗҫ кӗввине.
Хавхаланса —
епле ӳнерлӗн, меллӗн!—
юрлаттарать ӗҫчен ҫын станокне!
Тен, хывӑнать ӗҫ гимнӗ пит илемлӗн
хӗвел пек йӑлтӑркка деталь ҫине?
...Тӑнлатпӑр — ак епле янрать ӑсталӑх!
Кун евӗр музыка илтмен хальччен.
Этем —
чун уҫӑлсан —
чӗр ҫутҫанталӑк
тума пӗлмен илем тӑвать иккен!

* * *

Куҫран куҫа ҫиҫет-и чун ҫути,
ӑша тивсе илет-и туйӑм вучӗ,
нимрен хакли,—
кӑмӑлӑмри,
шалти,—
шеп сӑмаха куҫман кунсен ҫук шучӗ...
Арҫыннӑн ирӗк ҫук ҫӑмӑлттайла
чун-чӗрине уҫма тӳрех,

васкавлă —
хăйса калайманни кив çăлтăрла
чун тӳпинче чăмăртанаймĕ канлĕ...
Кам ыйăхсăр каçсен йӳç сĕрĕмне
хĕрӳ ĕç хавхипе сирме вĕреннĕ,
вăл шуçăм уçнă пурнăç илемне
çĕн сăвă çаврăмне кĕртсе киленĕ.

* * *

Аннеçĕм пур чухне хăйматлăх суйламарăм,
ылмаштарман хăйматлăхпа пуç хунă аттене.
Йăлтах ман чăн-чăнни —
аттесĕрлĕх,
ят,
парăм,
тăван тус-йыш,
Тăван Çĕршыв,
тăван анне.

* * *

Ăçта-ши «Чĕререн савап!» тесе
тупа тума хĕрӳлĕх панă каçĕ?!
Сăмах вылятнă пуль хĕпĕртесе
чĕри хăш тĕлтине туйман шух каччă...

Çапах ĕненнĕ пикесем пире:
чĕнӳллĕ яшлăх — тĕлпулу саманчĕ.
...Чĕре чиксе пăваниччен пĕрре
çут тĕнчене эп вилесле савманччĕ.

Тасаләхпа куç савăшнă чухне
тӗлпулусен тупи ёнентерўллӗ —
çапах та чӗрепе юратнине
çур ёмӗр чан çапсан сисетпӗр пулӗ...

Вара чухла пуçлатпăр илеме:
вăл — чӗрӗлӗх, хӗрарăм, вăл — çын килӗ...
Йӗс курăк хăлчăкне татса илме
çитмест хăюлăх: пурте хаклă, кирлӗ!

Çак шелсӗр самантра пўрни, чунри,
çумра утсан, пехетлӗ пурнăç сачӗ.
Эй, ёмӗрӗмӗн иккӗмӗш çурри,
тӗлпулуран та пиллӗрех пулсамччӗ!

* * *

— Тăван уй-хире юрататăп! — тесе
тӗрлесчӗ тăри кайăкла хӗпӗртўллӗн
тўпе сăпкинче... Тен, пултарăп та ўлӗм?
Халь шăппăн тăратăп тӗнсе, тӗлӗнсе:
ёçчен уй-хирпе калаçать! Ват ана шăп.
Тӗрлесчӗ — сăпай этемрен вăтанатăп:
çӗр хут çирӗпрех юратсан та çӗре,
пиçмен пуш сăмах калас çук вăл пӗрре.

— Тăван халăха юрататăп! — тесе
кӗрлесчӗ пӗрремӗш çурхи аслатиллӗн
çўлтен, пӗлӗтрен... Ман умрах питӗ тимлӗн
тин шăтнă калча йӗркине тӗпчесе,
хресчен тӗмсӗлет: «Эй, тивлетӗм, ăнсамччӗ! —
мӗнпур халăха перекетлӗ тусамччӗ!»
Çӗр хут тусăн тивӗçӗ, тен, аслăрах —
таса туйăмне ўстерет вăл вăрах.

— Тăван Çĕршыва юрататăп! — тесе
тăвасчĕ тупа, янраса чан сассиллĕн,
тĕнче илтмелле... Сăрт çине çар кассийĕн
тухать ушкăнпа ват салтак, ретленсе.
Вутра та, ĕçре те вĕсем харсăр, çирĕп —
Çĕршывăмăр шăп çавăнпа вăйлă, ирĕк.
Тăрап именсе паттăрсен хыçĕнче —
калас сăмахсем те чĕлхе вĕçĕнче.

— Тăван уй-хире юрататăп! —
пăшăлтататăп.
—Тăван халăха юрататăп!—
сăвă пуçлатăп.
— Тăван Çĕршыва юрататăп! —
тупа тăватăп,
ĕçчен çынпа ват салтака курах,
сăпайлăн та хăюллăнрах.

# Сӳнми вут-çулӑм

## *Микропоэма*

1. Çак вута çынсем пӑхса усраççӗ—
çулӑмӗ сӳнмест ун саманта.
Çумӑр-и, çил-тӑвӑл-и, ир-каç-и—
сыхлӑх хуралта тӑрать кунта.
Прометей пекех, совет салтакӗ —
çулӑм çутинче, чул хӳттинче...
Ун умне чечек хуратпӑр акӑ
вӗрипе пите ӗнте-ӗнте.
Вут чӗлхи асаплӑн туртӑнать те
çӗрӗн хӗрнӗ чул çӑварӗнче —
тӳпере çиçет мӗлке çуначӗ,
кисренсе илет мӗнпур тӗнче...

2. Ӑшӑ çумӑр анчӗ шӑпӑр-шӑпӑр,
чӑшлатса сӳнет, вилет тумла.
Ушкӑн-ушкӑнӑн тӑратпӑр шӑпӑрт,
хускалма хӑймасӑр, салтакла.
Ман çумра пӑр тивнӗ çӳçлӗ ватӑ —
виç арçын ача ертсе килни:
аттепе пӗр ӳсӗм пуль, сӑнпа та
ун пекрех... Чӑн мар, тен, туйӑнни?..
Шур пӗркенчӗклӗ çӗн кин ачашшӑн
йӑпшӑнать яш упӑшки çумне.
Пӗлӗт—çуйхашан ача-пӑчашӑн—
çутрӗ çитмӗл тӗслӗ илемне.
—Вӑрçӑра пуçне хуман пулсассӑн
упӑшкам... эй, манӑн та мӑнук
пулӗччӗ...— инке сывларӗ ассӑн,—
виççӗ мар, пӗртен-пӗрре те çук...

3. Сӑрӑлтатрӗ—шӑннӑ пек—çанçурӑм,
çӳç те тӑчӗ пулӗ вирелле:

«Çирĕм миллион вилни,— астурăм,—
тен, ӳсет çав шут пурна киле?!.
Хурлă шухăш хумĕнчен хăрарăм:
вăрçă пăрахман тискер ĕçне —
çултан-çул вăл вĕлерет хаяррăн...
çуралма пултарнисен йышне...
Çирĕм миллион парка турачĕ
ĕннĕ, çуннă пурнăç йывăççин —
миçешер хунав кашнин тухатчĕ
халиччен?! Калас-тăк тӳррĕн—çын?!»

4. Çумăр иртрĕ те хĕвел пит тимлĕн
йăлкăшма пуçларĕ тӳпере:
«Пурнăç ӳсĕмне чараймĕ вилĕм!»—
лăпкаса йăпатрĕ пек пире.
Çавăнпа çынсем пăхса усраççĕ
çак вута—сӳнмест вăл саманта.
Çумăр-и, çил-тăвăл-и, ир-каç-и —
сыхăлăх хуралта тăрать кунта.

* * *

Тăван Çĕршыв çинчен кашни сăмахăм, сăввăм —
Тăван Çĕршыв çинчен марри пĕрре те çук.
Ăшна хыптар,
хĕмлен,
çыр,
савăн,
тĕмсĕл,
ăвăн —
ун ячĕпе! Пĕр уншăн çăлтăр çут! —
тесе шухăшсене туптатăп кунĕн-çĕрĕн,
хĕртет-ши юрату хевти йĕркемсене?
Çунать ĕçри чĕре, ун ăшшинче-ши чĕртĕп
çĕн кĕвĕллĕ сăмах пулас туйăмсене?

Йалт сан ҫинчен, йăлтах сана, Тăван Ҫĕршывăм:
чĕлхе вĕҫне ларса вĕҫни, чун-чĕремри.
Чи ҫутă тĕс, илем шырарăм, сăвă хыврăм —
таса ятна пулсанччĕ тивĕҫлĕ пĕри!
Куҫсăрланса ӳкме, чĕркуҫленме памарĕ
хĕвеллĕ, пĕлĕтсемлĕ е шуҫăмлă тӳпе.
Тăван ҫĕр туртăмне туять-ха юн тымарĕ,
танлашмăп вĕҫевре вĕҫерĕннĕ тĕкпе...
Ҫул — уҫă. Ёнкелет те... усăнмасть ҫунатăм —
Ҫĕршывăм, эс чĕнен пехетлĕ ҫĕн киле.
Йĕрсе-хурланса мар, хавхаланса ҫунатăп —
сӳнсен,
тăван ҫĕре сапсамăр ман кĕле.

* * *

Эй, хывасчĕ ман ялан
юрату юрри —
чун хавалĕ ҫапмĕ чан
йӳтĕмсĕр, юри.

Кăмăл ҫĕкленсеччĕ ҫех,
туйăм та кăра —
ҫиҫĕмле ҫунса вĕҫет
шухăш ҫĕр тавра.

Ҫитрĕ вутлă енсенчен
вăл ҫут ир енне —
ырату ӳсет, кичем,
йывăр чĕрене...

Юратмастăп-и хĕрӳн,
ҫын, тĕнче, сире?!
Шанăҫ туйăмĕ, ан сӳн —
кĕвĕлен хитре.

Илемли, чĕрри — йăлтах
хаклă-çке мана,
мĕншĕн чи ансат сăмах
каланмасть çынна?

Пĕрлешсен ăшра тасан
çывăхри, инçи,
юрату юрри пулсам,
чунăм хӳттинчи!

* * *

Ик хевтеллĕ пек туптасчĕ сăввăма:
хĕртĕнтĕр сăмах —
янравлă,
çивĕч пултăр.
Илĕртет ĕç ирĕ — хал пур савăнма.
Кĕтнĕ кун сăнне паян çутма мел пур-тăр.
Чи ырри,
хакли — çак çĕр çинчи,
чăнни,
чи хитри — умра! —
теме хăю çитертĕм.
Ĕмĕт катинче шурăмпуçле çунни
ĕмĕр çĕнелсе пырса
чĕнет чиперрĕн.
Ăнтăлас унта!
Этемлĕх сăпкинче
тутăх кăрал мар,
пепке анчах сиктерĕп.
Эрлĕк пулмĕ, тен...
Чĕреçĕм,
ан пирче —
туслăх çутă ман,
ĕçри шырав çеç тертĕм.

* * *

Пĕчĕк тимшĕн çунса пăшăрханăп-и халь?
Пĕр тупа та каланмĕ ахаль.
Ан йӳнелĕр,
таса,
чи хĕрӳ сăмахсем —
пурнăç ĕçлĕ чух пухăр вăй-хал.

Шурăмпуç хĕрелет—çĕн кун чанĕ ян-ян!
янраса каясса-ши туян?
Сирĕнпе,
чи чĕнӳллĕ,
хастар сăмахсем,
мир маршне хутшăнатăп паян.

## Чăнлăх сасси

Çул иртнĕçем тулли,
çăра эфир.
Ӳссех пырать хăвачĕ сасă хумĕн.
Итлетпĕр тимлĕн тĕнчене эпир
е савăнса,
е тарăхса,
е хурлăн.

Сăпайлă,
çирĕп чăнлăх сассине
хупласшăн ултавпа элек тайфунĕ...
Чи кăткăс кĕрешӳ!
Çине-çине
хум çапăнать—тӳс,
çыннăн ăсĕ,
чунĕ.

Нӗрлет,
ёрлет е чашкӑрать суя.
Ҫӑхать пыл сӗлекеллӗ ҫурма чӑнлӑх.
Чуниллисем пуҫаракан ҫуя
итлекенсемшӗн пурнӑҫ —
тӗксӗм чӑтлӑх...

Мул тара тытнӑ путсӗрсем—
е йӗтӗс,
е йӗтӗм,
е тиран — эсрел тарҫи,
е ҫын асси—диктатор,
сӗмсӗр йӗксӗк,
е ват элекҫӗ,
вӑрҫӑ хыпарҫи —
тӗнче хуҫи пуласшӑн...

«Ёмӗрне
ҫут тӗнчере хуҫаланаймӗ вилӗм!» —
вӑраннӑ халӑхсем хурав параҫҫӗ вирлӗн
ҫӑласшӑн инкекрен тӑван Ҫӗрне.

«Чи пысӑк тивӗҫ—мирлӗ пурнасси!
Ан пултӑр вӑрҫӑ!» —
сыхлӑх чанӗ ҫапнӑн,
ултавлӑ шӑв-шава сирет те —
чаплӑн,
мӑнаҫлӑн ҫӗкленет Мускав сасси.

Мӗнпур этемлӗх ак тӑнлать ӑна:
унра — чӗнӳллӗ чӑнлӑх,
ҫутӑ шанӑҫ.
Эппин, мир маршӗсем тата вӑйланӗҫ,
тискер вӑрҫа ҫул памӗ самана!

# АЧАЛĂХ УРХАМАХĔ—ÇИЛÇУНАТ

*Поэма*

## I

Тăван кĕтес — асаилӳ тĕнчи,
Ачалăх ун асран кайми юмахĕ.
Унта чĕнет кĕтӳçĕ шăхличи,
Сăрнай кĕвви, сăпка юррин сăмахĕ.
Чан çапнăн авăтса ярать автан.
Çăвать хĕвеллĕ çумăр шăпăр-шăпăр.
Чĕнӳллĕн кĕçенсе тухать ялтан
Ачалăх урхамахĕ тăпăрт-тăпăрт!
Епле хитре ун çулăмлă çилхи!
Епле вăрт-варт ун çиçĕмлĕ çуначĕ!
Хум-юхăм евĕрлĕ чуппи-çăрхи.
Таканĕсем хĕм сирпĕтсе çунаççĕ.
Ачалăх урхамахĕ — Çилçунат!
Хăçан унпа туслашăп-ши эп теттĕм.
Вут ĕмĕт çунтаратчĕ-ши чуна?
Эй, тутлă тĕлĕк тĕллентерне тертĕм!
Тăван кĕтес — асаилӳ тĕнчи,
Ачалăх ун чи кăмăллă юмахĕ.
Унта чĕнет асамăç шăхличи,
Чи çепĕç юрăсен кĕвви, сăмахĕ...

## II

Умра — асри пĕрремĕш курăну:
Улма чăпар ут тулхăрать — хаваслă.

Шлем тăхăннă атте хушать: «Эй, ну!
Тапран, тăванăм! Çулĕ пултăр аслă!..»
Тĕрленĕ хыçлă ашăклă çуна
Кăрт! хускалса юрла пуçлать те юрă,
Атте тилхепине парать мана:
«Тыт çирĕпрех. Кăшт карăнтар-ха... Юрĕ».
Чупмасть — вĕçет çунатлă урхамах,
Сăмси-çăварĕнчен палкать пăс-тĕтĕм!
Епле аван!..
Ку — тĕлĕк халь, юмах:
Асри тĕнче — инçе, тӳпи ун тĕксĕм...
Ак урăх курăну тухать ума.
Килте. Çынсем юрлаççĕ те йĕреççĕ.
Мĕн чухлĕн килнĕ! Мĕншĕн? Мĕн тума?
«Аттӳ* вăрçа каять—курса юл»,—теççĕ.
Вĕри сухалĕпе пите ĕнтсе,
«Сыв пул!»—тесе, атте пуçран лăпкарĕ.
...Халь те янрать-ха шăнкăрав чĕнсе—
Салтак тăван килне таврăнаймарĕ...

## III

Епле кĕтеттĕм эп вăл килессе!
Салхуллăн пуйăс сассине итлеттĕм.
Çуран çын, лав-и— «Тен, атте?!»—тесе,
Çулсем çинчен куçа илместĕм.
Илемлĕ шĕвĕр тăрăллă шлемпа,
Çĕн шинельпе сăнарĕ çывхаратчĕ...
...Хăрушă вăрçăн сив шевли—шăпа?!—
Ачалăх телейне хăртса хăварчĕ.
Йăлт хăшкăлчĕ кĕте-кĕте анне:

---

* Аçу (вырăнти калаçу).

«Ах, ҫирӗ-шим пуҫне эсрел ҫич ючӗ?»
Салтак тăпри ăҫта-ши? Вырăнне
Тупайăп-ши? Асра чӗр сăн ҫех юлчӗ.
«Чӗре ман тапӗ ывăл кăкринче»,—
тесе вăл ҫырнă... Тапӗ, ывăль ар-тăк.
...Хăй лартнă ҫӳл йăмра хăвăлӗнче
Ик ҫырăвне эп упраса хăвартăм.
Вӗҫме пуҫланă чӗпӗ пек вара
Лăска турат ҫинче сикеттӗм канлӗн.
Шыраттăм ятăма сар ҫырура...
Ҫаплах вӗрентӗм вулама хам халлӗн.

## IV

...Мăн асаттен—кунҫул шеп-и, хӗн-и—
урхамахсем курсан вӗренӗ юнӗ.
Ут кӗтӗвӗн хир тăрăх вирхӗнни
Чи авалхи юрăсенче ҫех юлнă.
Ҫапах та хресченле телей пӳрсен
Витесенче кӗҫенкеленӗ ăйăр.
Тухман-и утлă паттăрсем пиртен?—
Ҫич ют эшкерӗ тапăнма ҫеҫ хăйтăр!..
Ентешӗм вырăс пиччӗшпе пӗрле
Аркатнă ордана: «Пӗт, пусмăр, юрлăх!»
Е аслă Петӗрпе пăхаттирле
Тустарнă шведсене, е пит хăюллăн,
Хастаррăн тӳпеленӗ француза...
Ирӗклӗхе юрат, сыхла—чап кайӗ,
Шăп ҫавăнпа вӗҫет хӗҫне ҫутса
Ҫунатлă учӗпе чăваш Чапайӗ!
...Аттем ялта ут пăхнă пит ăста
Е тырă акнă, вырнă, утă пухнă.
Тăван Ҫӗршыв чӗнсессӗн, фашиста
Сирпӗнтерме урхамахпа вăл тухнă.

## V

Атте шлемне мăнаçлăн тăхăнса,
Пĕррехинче эп «айăр» йĕвенлерĕм —
Сатуррăн кĕçенсе те тулхăрса
Урамсенче ĕрĕхтерсе çӳрерĕм.
Сыхлан, фашист — мăян та талпиçен!—
Атакăра халь утлă çар салтакĕ!
Айкашрăм хĕç сип-симĕс пуличчен.
Ман урхамах — çатан карта патакĕ...
Анчах пĕр ĕмпичче, çавна курсан,
Хĕрӳ вăййа ĕмĕрлĕхе вĕçлерĕ.
— Итле, ачам: патак тек ан утлан—
Мухтавлă йĕкĕт пулаймастăн,—терĕ.—
Йали çапла... Йăх пуçĕсем хушман:
Хăранă утсăра тухса каймашкăн...
Пыр витене,— çапла, тус, шухăш ман,—
Çунатлă урхамах пăхма... Ан ашкăн!
— Çунатлă урхамах?! Чим, колхозра
Ăçтан ун пек ут пултăр? Ай, чее-çке...
— Аттӳ пăхса ӳстернĕ айăра
Ялта,— тет вăл,— çынсем çапла чĕнеççĕ...

## VI

Хĕвел сăрт-ту хыçне тапса сиксен,
Хĕлхемлĕ сулхăн сапрĕ Алтăр Çăлтăр.
Эп çывăрмасăр выртрăм чылайччен —
Ача епле ĕмĕтленмесĕр чăттăр!
Миçемĕш хут ак куç умне тухса
Çунатлă урхамах чĕнсе кĕçенчĕ,—
Чечеклĕ улăхран унпа ухса
Сенкер тĕтрелĕхе вĕçсе кĕрсенччĕ!
Ак тĕлĕрсе кайсан та тĕлĕкре
Вăл чупрĕ пек шур кăпăклă хум çийĕн.

Унта чĕвен те тăчĕ вăл хитре
Çилхи çилпе туранчĕ сийĕн-сийĕн.
Ак аçа-çиçĕм пĕлĕчĕ айне
Хăрушă вăрçă хирĕ тухрĕ—хурлă!
Çунатлă ут аманнă аттене
Хăтарчĕ асамат кĕперĕ урлă...
Вăрантăм эпĕ, хăраса кайса,
Лупасайне анса çăл шывĕ ĕçрĕм.
Пите-куçа çуса, сăртри касса —
Лаша вити енне — васкавлăн вĕçрĕм.

## VII

Сайхах карталлă вăрăм ут вити
Сăрт тӳпине вырнаçнă питĕ меллĕн.
Тăван тавралăхăм таçта çити
Унтан курнать çап-çавракан, илемлĕн.
Юханшывсем, хирсем, сăрт-ту тӳпи,
Вărман та улăх куç умне тухаççĕ.
Сенкер инçет... Унта эп çитĕп-и?
Çут шывлă Çарăмсан умрах юхать-çке!
Раççей варри... Йăмраллă кивĕ ял.
Мухтавлă улăп тăприсем... Çул аслă.
Тăван Çĕршыв — чи чаплă, таса ят!
Мĕн пĕчĕкрен вăл маншăн пулнă хаклă.
...Ем-ешĕл сăрталла çĕкленнĕ май
Ăна сăнатăп: ик çунат — ик алă!
Епле çĕр катинче илем нумай!
Епле тӳпи ун çӳллĕ, анĕ аслă!
Йĕритавралăх ăшă канăçра.
Хĕвел тухасшăн — ак вăранĕ халăх.
...Кĕрлет хăрушă вăрçă анăçра.
Аса илсен, салхулланать ачалăх.

## VIII

Пура вите. Кĕретĕп шикленсе.
Анчах—мĕскер ку?! Пӳлмесем пуш-пушă...
Çунса тăратăп: «Манчĕ-шим?!» — тесе.
Кăштах, тен, сӳрĕклентĕм те пĕр хушă.
«Шӳтлерĕ-шим Хĕветĕр ĕмпичче?
Ват çын — хăй пĕчĕк ачаран куласшăн...»
Тем йăрр юхса пĕçертрĕ ман пите.
Эх, çакăнта тăван атте пулсассăн!
Сасартăк укăлчаллă çул енче
Кĕçенчĕç лашасем — чĕрем кăрт! сикрĕ.
Ак, тăпăрт-тăпăртик! кĕвĕленсе,
Вăйланчĕ савăк сасă — çывăх! çитрĕ!
— Лăплан, айван. Путек пек ан чĕтре!—
Эп арçынла йăпаннă пек пулатăп.
Çук, пурпĕр кăкăра тӳнккет чĕре —
Улатакка чĕппи... Тен, эп юлатăп?!
Ак вирхĕнсе кĕрет яла кĕтӳ!
Улма чăпар ут чи малта — палларăм!
Кур, савăн — умăнтах-çке ĕмĕтӳ! —
Епле юртать вăл çăмăллăн, патваррăн.

## IX

— Ытла та каçĕ ырă выртмара.
Кăшт пулă хыпрĕ авă — çилсĕр шуçăм,—
Хĕветĕр ĕмпичче чĕн уртмахра
Вылятрĕ пулă. Кулчĕ ăшшăн, уççăн.
Эп ăмсанса сăнарăм ăйăра:
Ури епле çинçе те тăпăл-тăпăл,
Кашни — шăп пакăлчак таран хура;
Тип-тикĕс каснă çилхине: ан тăпăл;
Амри те çӳллĕ, мăкăр, чăмăртак;
Илемлĕ мăйĕ юхăм евĕр авăк;

Аратлă пуçĕ мăнаçрах пăртак:
Çамки çинче — пĕр пĕчĕк пурçăн явлăк;
Кўлемлĕ пĕвĕ ун епле яштак!
Хўри кăвак; хăлхи вылять пĕр вĕçĕм;
Каçхи тўпе пек куçĕ çех кăштах
Кичем пек туйăнать, кăштах, тен, вĕчĕх...
Епле, епле унпа ман паллашас! —
Пăхайăттăм ăна эп пĕр хамах-и?
— Пул эсĕ маншăн чăн-чăн тус, лашам,
Пул ĕмĕтри ачалăх урхамахĕ.

## X

...Атте пăхса ўстернĕ ăйăра
Юратрăм чĕререн, çавна кура-ши
Мана вăл хăвăрт хăнăхрĕ вара —
Чĕнсессĕн кĕçенетчĕ, тулхăратчĕ.
Кĕреттĕм ăшă, хўтĕ пўлмеке,
Тип турама унпа эп уйăраттăм,
Ут çывăхне лартаттăм чикмеке —
Шур çилхине йĕс турапа тураттăм.
Е хыркăчлаттăм питĕ тăрăшса,
Е ши-ши! шăхăрса шыв ĕçтереттĕм,
Хурса параттăм утă сырăша,
Хыраттăм йывăç урая черетлĕн.
Унтан, каска лартса, хăра-хăрах
Уртăнкалаттăм çўлелле: «Вăй патăр!»
Анчах хăйман-çке утланма вăрах —
Ăшра вăрçаттăм хама хам: «Тăм паттăр...»
Хавха хушса вăлтатчĕ ĕмпичче:
«Çунат шăтсан, чакать, тет,
 çын курпунĕ...»
Ун чух эп каяйманччĕ-ха çичче,
Аттесĕр ўснĕ — тен, хăюсăр пулнă...

## XI

Пĕрре ирех урхамаха кӳлсе,—
Çанталăкĕ ун чух тăратчĕ шăрăх,—
Вĕçтертĕмĕр хĕпĕртесе ӳксе
Çăра сăрланнă вăрмана çул тăрăх.
...Уçланкă. Эй, ăçта хуртсен вĕлли?—
Сараççĕ пыллă çеçкесем ыр шăршă.
Çулать ват тусăм курăк ут валли,
Шӳтлет хăй: «Çимĕк мунчинчен те ăшă!»
Паккуссене пухап та çĕклемпе
Вăй çитнĕ чухлĕ лав çине тиетĕп.
Ĕç пĕтерсен тин тунă шăхличпе
Чунра çуралнă кĕвĕ кĕвĕлетĕп...
Пултран, кăшкар тататпăр та — яла.
Ĕшеннĕ ĕмпичче чаккать вут чулĕ.
Кăшт шикленетĕп: çул анаталла,
Ан ĕрĕхтĕрччĕ ăйăр — тем те пулĕ!..
Ман аллăмра татах чĕн тилхепе!
Атте çех çук умра... Ăçта вăл халĕ?
Вылять çил урхамахăм çилхипе.
Е тунсăхлă кăштах, е ыра, канлĕ.

## XII

Ачалăх ĕмĕтне пурнăçлакан —
Пĕлетĕр, чăн та никамран телейлĕ.
Эй, кĕвĕçтĕр манпа курнăçакан!—
Епле утланнă ăйăра эп меллĕ!
Юртмасть — вĕçет çунатлă урхамах,
Ут картинче те мар пек — пĕлĕт урлă.
Ун чĕлпĕрне эп тытнă — кур!— хамах.
Çил шăхăрать хальччен илтмен çĕн юрă.
Памасть ута асма та ĕрĕхме

Ман сыхлă ĕмпиччемĕн чĕн пăявĕ.
— Çитмен-ха вăхăт ирĕклĕн вĕçме! —
Кулать вăл... Пурпĕр шеп самант уявĕ!
Миçе çавра эп ут юпи тавра
Тăвайрăм-ши? — пуç çаврăна пуçларĕ.
Ак çĕр те тикĕт пек юхать... Вара —
Унта эп тӳнтĕм... Йĕтĕм: намăс мар-и?!
—Э-э, типĕт-ха куç сывлăмне часрах.—
Эп илтрĕм.—Чăн-чăн йĕкĕтсем хӳхлеç-и?!
Çаралнă шăпăр мар-çке урхамах —
Арсем те ун çинчен хăш чух ӳкеççĕ...

## XIII

— Пуçтарăн, харсăр йĕкĕт, выртмана!—
Каçкӳлĕм ĕмпичче кулса каларĕ.—
Каятпăр Çарăмсан хĕрне — чуна
Пит ăшăтать унти кăвайт кăварĕ...
Ак — эпĕ вичкĕн урхамах çинче!
Те ут ури сасси ку — тăпăрт-тăпăрт!—
Те ман чĕре тапать? Итле, тĕнче!
Юрлас килет — çапах пыратăп шăпăрт.
Хам хаваслишĕн хам та вăтанап,
Саманчĕ те чуна уçма пит меллĕ.
Пĕлетĕп: вăрçă тамăкпа танах —
Пулаймăн вăл пур чух тулли телейллĕ.
Анчах саманчĕ — чĕннипе пит шеп!
Сирет хура терте те вăл тивлетĕн.
...Ак эп утпа Çарăмсанра ишеп!
Ак вут умне ларса юмах итлетĕп.
Паллах, çунатлă урхамах çинчен:
Телей шырать хуçи ун — улăп-каччă...
...Кайран сăнатăп тӳпене темччен:
Унта вĕçет шух шухăшсен хăлачĕ...

## XIV

Сас панӑ май таҫта йӗс шӑнкӑрав
Чун-чӗрене пырса кӗрет салхулӑх.
Ӳлеҫҫӗ выҫӑ кашкӑрсем вӑрах.
Масар пек шӑпланать сасартӑк улӑх.
Шуҫать кӗтӳ те вут ҫывӑхнерех,
Ертӳҫӗ тулхӑрать асӑрхануллӑн.
Шыв вӑкӑрӗ-ши мӗкӗрет-йӗрет?
Ҫӑтӑлтатса илет, сӳнес пек, ҫулӑм.
Ҫиҫсе илет те ҫиҫӗм анӑҫра
Кӗмсӗртетет тем инҫетре пӗр хушӑ —
Кисреннӗ евӗр ҫӗр... Мӗн ман асра?
Тен, вӑрҫӑ ҫывхарать?! Епле хӑрушӑ!..
Хӗветӗр ӗмпичче те ыйхинче
Асаплӑн йынӑшса илет тем пулнӑн.
Сиксе тӑрать.— Э-э, аслати... Инҫе.
Кунта ҫитеймӗ — вӑйӗ чакнӑ унӑн...
Ирпе пуш пыршӑра — вӗре ҫӗлен,
Ӑша ӗнтсех ярать вучах кӑварӗ...
Ак шуҫӑм хӗрелет — киле ҫӗклен!
Анне, тен, уйӑрттарнӑ сӗт хӑварӗ...

## XV

Ун чух ҫу ҫитрӗ выҫӑ-тутӑлла.
Тавах тӑван ене! — ун сӑрчӗ, варӗ,
Парнелесе кӗпҫе, кӑмпа, ҫырла,
Ҫӑлса хӑварчӗ вилӗмрен — сыватрӗ.
Мухтав ҫӗр панӑ чӗрлӗх сӗткенне!—
Ӳтри юна вӑл сивӗнме памарӗ...
Куратӑп та ак тырӑ пиҫнине —
Чун савӑнать: ҫӗн ҫӑкӑр пулӗ мар-и!
Утсем те самӑрланчӗҫ майӗпе
Ака-суха туса кӑшт каннӑ майӑн.

...Ак çумăр чашлаттарчĕ. Çул йĕпе.
Татах шăваççĕ пĕлĕтсем нумайăн.
Эппин, паян тухаймĕç ут çулма—
Эппин, анне çырла татса килеймĕ...
Е васкатас та мар-и утçăма?
Шуралнă евĕр темшĕн ир илемĕ.
Анчах хĕвел куç уçнă самантрах
Хĕмленчĕ ăшшăн асамат кĕперĕ.
Ун айĕн, çумăра пăхмасăрах,
Тăри янравлă кĕвĕ кĕвĕлерĕ.

## XVI

— Лаша — çын тусĕ, ăслă вăл, ĕçчен,
Хресчен еккишĕн — ĕмĕрхи илем-тĕр,—
Час-час астутаратчĕ ĕмпиччем,—
Ан мантăр çын ăна, ялан илентĕр.
Пĕл: лашасен те йăх тымарĕ пур,
Мăн асанне, мăн асатте таврашĕ.
Çак пĕчĕк кĕтӳре те, тусăм, кур:
Пур тĕрлĕрен тĕсли — миçе ăрат-ши?
Ак çак чуптарăн юнĕ пит таса.
Ак—хура турă: ун юртти пит тикĕс.
Ку—тимĕр кăвакки—каять асса.
Ак çак хури — виç кашкăр урлă сикĕ!
Пурли тесен, кашни-пĕр чи вăйли:
Мĕн чухлĕ тиесен те чăхăмламĕç.
Хушка çамка çăрха—чи чătămли:
Çар урхамахĕ пулнă унăн амăш...
...Улма чăпарăн ăслă куçĕнче
Пур евĕр туйăнатчĕ ăшă туйăм,
Ун сĕм-кăвак таса тĕкĕрĕнче
Сăнарлăн курăнатчĕ савнă уйăм...

## XVII

Урать-ха вăрçă — унăн кĕрлевне
Илтетпĕр пек, çитсен хура хыпарĕ.
Çанталăк сулăнать сив кĕр енне,
Нуша тени пиртен çаплах хăпмарĕ.
...Пучах пухатпăр хăмăл хушшинчен
Эпир, аттесĕр ачасем, вар тăрăх—
Курас пулсан, лекет ял хуçинчен:
Тытсассăн вут-кăвар çинчи пек тăрăн...
Çӳретпĕр — вăрă пек ! — чăр-чар пăхса.
Сасартăк — юланут! Ак çитрĕ! Çитрĕ!
Ак таптатать!..
                    Анчах — тăп чарăнса —
Кĕçенчĕ ăйăр ман умрах. Те сисрĕ?
Улма чăпар?! Палларĕ-шим мана?
Чĕвен тăрса юланутçа ӳкерчĕ.
Кукалеме пуçланăччĕ кăна,
Эп чĕнтĕм те—вăрманалла вĕçтерчĕ...
Янрашрĕ «ял хуçийĕ» юнаса:
— Чим, таврăн-ха—чĕн пушăсем ăс парĕç!
...Черечĕ çитрĕ пуль—Çилçуната
Часах, таканласа, вăрçа ăсатрĕç.

## XVIII

Салхуллă пулчĕ пирĕн уйрăлу.
Пите çунтарчĕ урхамах куççулĕ.
— Чипер кай... Кĕтĕç улăх, уй, ялу.
Çĕнтерӳпе вĕçлентĕр вăрçă çулĕ.
Тĕл пулăн эс унта, тен, аттене —
Аманнă хыççăн вилĕмрен хăтарăн,
Тăван Çĕршывăмран фашист йăхне
Таканупа тапта-тапта хăвалăн...
...Салхуллăн путрĕ пуйăс анăçа —

Чуна çураймĕ тус сасси... Каç-ирĕм
Канăçсăртан тухас пек манăçа
Ман Çилçунат —
кĕçеннине ак илтрĕм!
Куратăп: пĕр улма чăпар тиха
Сиккелесе çӳрет уйра!.. Мĕн пулчĕ?!
— Ӳсет... Ак ашшĕне те çитĕ-ха,—
Хĕветĕр ĕмпиччем чеен йăл кулчĕ...
— Улма чăпар тиха—ман пĕчĕк тус—
Сана чунтан савса пăхса ӳстерĕп.
Чĕвен тăма вĕрен—пуçна ан ус!
Ӳссен мана хир тăрăх эс вĕçтерĕн...

## XIX

Тăван кĕтес — асаилӳ тĕнчи,
Ачалăх ун асран каймн юмахĕ.
Унта чĕнет кĕтӳçĕ шăхличи.
Сăрнай кĕвви, сăпка юррин сăмахĕ.,
Чан çапнăн авăтса ярать автан.
Çăвать хĕвеллĕ çумăр шăпăр-шăпăр.
Чĕнӳллĕн кĕçенсе тухать таçтан
Поэзи урхамахĕ тăпăрт-тăпăрт!
Епле хитре ун çулăмлă çилхи!
Епле вăрт-варт ун çиçĕмлĕ çуначĕ!
Хум-юхăм евĕрлĕ чуппи-çăрхи.
Таканĕсем хĕм сирпĕтсе çунаççĕ.
Поэзи урхамахĕ — Çилçунат...
Епле унпа туслашăп-ши эп теттĕм.
Вут ĕмĕт çунтаратчĕ-ши чуна?
Эй, тутлă тĕлĕк тĕллентерне тертĕм!..
Тăван кĕтес — асаилӳ тĕнчи,
Ачалăх ун чи кăмăллă юмахĕ.
Унта чĕнет асамăç шăхличи,
Чи çепĕç юрăсен кĕвви, сăмахĕ...

## XX

Тăр-кăнтăрла шăрт-шарт! çурса çĕре
Урма пуçларĕ вăрçă çулĕн хĕлĕ.
Хĕвел кĕрт çийĕпе çӳре-çӳре
Ĕшенчĕ пуль—анать. Хăлхи хĕп-хĕрлĕ.
Аттемĕн шĕвĕр тăраллă шлемне,
Çĕр саплăк кĕрĕк тăхăнас та—сивĕ
Епле çĕнейĕ паттăр ывăлне!
Çапах сăмса — çуха ăшне: тăм тивĕ.
Васкатăп-çке хуралçăсен пӳртне —
Унта пире кĕтет мучи-юмахçă.
Ларатпăр та ĕçпе кăвар патне—
Пуçланчĕ тĕрлĕ тĕлĕнтермĕш каçĕ!
Хиврен, илемлĕн явăнать пăяв.
Юмах тĕнчин тӳпи ак янкăр уçă.
Чакать хĕн-хур, пуçланнă пек уяв,—
Йăлл çутăлса каять тус-тантăш куçĕ.
Ак харсăр улăп-пиччепе пĕрле
Улма чăпар утпа çула тухатпăр:
Ак пирĕн эсрелпе кĕрешмелле,
Çĕр тĕпĕнчен çӳл тӳпене ухатпăр!..

## XXI

Юмах тĕнчи ытарайми хитре —
Чике старик ăрăмăçланă майăн
Вĕре çĕлен те çĕнеймест пире,
Пулсан та вĕркĕç евĕр пуç нумай ун...
Анчах пичурккара вут сӳнеспе
Пăяв тĕвĕленет, сăмах та хĕмсĕр.
...Кĕретпĕр витене ик çын ĕçпе,
Хунар çутса,— сĕнксе тăраççĕ чĕмсĕр
Тем кавлекен ват лашасем унта:
Епле хыткан, епле вĕсем ĕшенчĕк...

Ак юмахри те вăрçăри ута
Асилтерсе ман çамрăк тус кĕçенчĕ!
Ăна чĕнетĕп Çилçунат ятпах.
Ак нӳрĕ тутипе алла вăл тĕкрĕ.
— Çăва тухсан пулать маттур юпах.
Хĕл пит хаяр—каçасчĕ сыввăн,—терĕ
Ыр ĕмпичче, лăпкарĕ тихана,
Алли хулран кăшт сĕртĕнчĕ мана та.
— Кĕтсе илесчĕ те хавас куна...
Килейĕç-ши... Ача-ха — тен, манатăн?

## XXII

Манатăп?! Эй, пĕлесчĕ ĕмпиччен
Тунсăхăма!— Килте, шкулта чухне,—
теп,—
Ĕмĕтленетĕп куç йăмăхиччен,
Тĕлĕксенче те кăшкăрса чĕнетĕп
Салтак аттепеле урхамаха,—
Вĕçсе çӳре-çӳре таçти çĕр çийĕн,
Шур кайăкла çӳлтен пăха-пăха
Шыратăп вĕсене... Тискеррĕн, сиввĕн
Çын пуçлă аçтаха, усал-хаяр
Вут пĕрĕхет ман çуната ĕнтесшĕн.
Вара — ӳкетĕп, тĕк тăкса, йăр-яр...
Ак тимĕр эрешмен юна ĕçесшĕн —
Çывхарнăçем ӳсет! Пăвать майран...
Анчах — телей! — йăлт çухалать сасартăк
Вăраннă май хăрушă ыйăхран...
Ылханлă вăрçă усалне кам чартăр?!
«Ак — Çилçунат ӳссен — тарап вăрçа!—
Тупа тăватăп ăшăмра хĕрӳллĕн,
Йăпанăçлăн шăла-шăла куçа.—
Эсрел асси—фашист—урайме ӳлĕм!..»

## XXIII

Ирпе шăкăлтата-шăкăлтата
Лаша кӳлетпӗр — ёмпичче, эп — иккӗн:
Анне вăрман касать — унта вутта
Ман каймалла.— Эй, хура-туррăм, виркӗн!
Çуна çуначӗсем çине тăрса
Эп чăн-чăн йӗкӗтле шик! шăхăратăп,
Тилхепене кăрт-карт, вăрт-варт туртса:
Эй, курăр! Ывăл çук-им шух ăратăн?!
Юртам пекки туса пырать лаша.
Эп кăшкăратăп: — Ыткăн, урхамахăм!
Мӗн вăратать-ши ёмӗт-шухăша?
Тен, хир-вăрман сассиллӗ янкăр ахрăм?
Хальччен илтмен темле çӗн кӗвӗпе
Çӗн сăмахсем кала-кала юрлатăп.
Иртет, ав, пуйăс йывăр тӗтӗмпе
сывла-сывла — эп ал сулса юлатăп...
Ав, тилӗ сиккелет йӗтем çинче.
Умра—вăрман. Тухмасть-и ушкăн кашкăр?!
Ав, тем хускалчӗ пек туйра енче!
Э-э, кусăрка иккен!—Чим, çил, ан чашкăр!

## XXIV

Те хăнăхрăм — ак çуталать умра
Юмах-вăрман хӗллехилле илемлӗн.
Пас хӗмӗ йăлтăртатнă хушăра
Çӳл йывăçсем çинчен куçа илеймӗн.
Çӳçеллӗ хурăн, тӗкӗрес юман,
Йӗкеллӗ чăрăш, çутă симӗс ăвăс...
Шап-шур çӗклем йăтман турат юлман.
Кăшт сӗртӗнсен—манран юр каччă тăвӗç.
Ăçта-унта — мулкач йӗррин тӗрри.
Ак авăтма пуçларӗç хурлăн-хурлăн

Тем сиснӗ ӑсансем: кӗрри-кӗрри...
Вӗсен чуччу-сӑпки — чи ҫӳллӗ хурӑн.
Пӗр типӗ йывӑҫ карӑш сассипе
Ӳпкевлӗн йынӑшать — ҫил-тӑвӑл авнӑн...
Аташрӑм, тен? Чим, варкӑш кассипе
Вӗҫмест-и шӑршӑ? — Эй, юртсам, тӑванӑм!
Ак уҫҫӑн илтрӗм пӑчкӑ кӗввине!
Ак ман умра—чӗнӳллӗ ҫулӑм-тӗтӗм!
— Куратăр-и, кам ҫитрӗ! — тет анне.—
Шӑнмарӑн-и?—Шш-шшӑнман... Нн-ним чул...
Пӗр чӗптӗм.

## XXV

Сӑнатӑп вут умне вӑшт пӗшкӗнсен:
Епле чипер анне, аппа-инкемӗр!
Эй, чӑн та юмахри юрпикесем!
Ар-упӑшка ӗҫне тӑваҫҫӗ темӗр...
Шаршан ҫинче — сар кӗрӗк те сӑҳман.
Ҫӳҫ кӑтрисем, куҫ хӑрпӑкӗ пасарнӑ.
Ак ахлатса ӳкет кӗреш юман,
Ак хурӑнтан хӗм сирпӗнет — сап-сарӑ.
Туртатӑп пӑчкӑ аннепе пӗрле
Е пуртӑпа турат иртетӗп вирлӗ:
Шӑнать Мускав ачи-пӑчи хӗлле,
Ытти хуласенче те вутӑ кирлӗ.
...Ак—лав та хатӗр.—Эй, тапран, лашам!
Каҫчен тепре килес пулать — васкасчӗ.
— Мӗнле киле ҫитейӗн-ши, ачам?
Пӗр хӗр шӳтлет: — Ҫитмест-и ҫак яш кашчӑ!
Аналла юртать те тӑвалла
Лава аран туртать ман хура турӑ.
Сулӑнкӑна кайсан, мӗн тумалла?!
...Ав, ял та курӑнать—пуҫлас пуль юрӑ.

## XXVI

...Тăманлă, сивĕ хĕллехи каçсем.
Çил тăлăх арăм евĕр ĕсĕкленĕ
Е пӳлĕнсе ӳленĕ чух кичем:
Тен, тĕнчере мур тăвăлĕ çĕкленнĕ?!
Вут ăшшинче, мĕлт-мелт хăй çутинче
Эп ырлăхра, ăшчик вăркать пулин те.
Салтак аттеçĕм вăрçă çуртĕнче —
Сив окопра — кӳтсе выртать пуль ĕнтĕ...
Аса илет пуль аннене, мана.
Атакăна çĕрле чух çĕкленеç-им?
— Эй, пултăрччĕ чăн ахăрсамана
Çак урмăш каç тăшманшăн! — тет аннеçĕм.
Вăл çăпата хуçать, эп сасăпа
Вулатăп — ман умра çыру тĕркемĕ.
Çара яма алса çыхать аппа —
Ăна чи харсăр паттăр та тиркемĕ.
...Хăй сӳнтерсен, хĕрӳллĕн те темччен
Пăшăлтатать анне — тăвать пуль кĕлĕ.
Те аташу, те тĕлĕк: сăрт енчен
Пĕр юланут вĕçет — ялавĕ хĕмлĕ...

## XXVII

— Çур ĕмĕр çакăн евĕр хĕл пулман —
Тепле çăва тухар, — тет ĕмпиччеçĕм. —
Алăксене хӳсе каять тăман —
Хутман пӳртрех кăнас-им сĕм-пĕччençĕн?
Вĕçсе пырать-пырать те пат! ӳкет
Шăнса-кӳтсе пăрланнă кăвакарчăн —
Этем те çавăн пек... Пирпе пĕркет
Вара ăна сăмсасăр, шăлсăр карчăк...
...Чăлах Каллям, Илле хăта Вали,
Ват ĕмпичче, уксах салтак та эпĕ

Алтатпăр шăтăк çĕн виле валли —
Вут ăшăтсан, кăшт чавăнать тăм тĕпĕ.
— Çапла окоп чаватпăр вăрçăра —
Вĕрен,— хистет уксах салтак Хĕветĕр.
Çĕн хĕрессем кив масарта çăра...
Ытла та кунĕ хурлăхлă, хĕвелсĕр.
...Ав курăнчĕ çын кўлĕннĕ çуна.
Ак тупăка тўнккет çĕр кĕмĕрккийĕ.
Хĕн макăрма, хĕн хытарма чуна.
Вилни—çĕрте, чĕрришĕн—тўсĕм кирлĕ!

## XXVIII

...Кĕлет, вите, пўрт-çурт тăрри çара —
Те çавăнпа ял сăнĕ пит салхуллă.
Ак çĕр суранĕн пўрĕ те çăра
Юхать çырансенче... Варсем — шур юрлă.
Кунран-кун сиплĕрех хĕвел ăшши.
Ак симĕсленчĕ сăрт-тусен çеремĕ.
Вĕçет ун çийĕн чĕрĕлĕх шăрши —
Çак ырлăхра епле кĕтў çўремĕ.
Тăван вăрман, çĕр, шыв, уй-хир татах
Имшер ўте, юна имле пуçларĕ.
Пухатпăр та çўп-çап, патак-çатак
Кăвайт чĕртетпĕр — тунсăхланă мар-и?
Сăрт хĕррипе вирхĕнтерсе çарран
Çапăçăва кĕретпĕр ак хастаррăн.
Ыр хыпарсем килеççĕ вăрçăран —
Çитсем, çут çĕнтерў! Аттеçĕм, таврăн!
...Чĕнўллĕн кăшкăртса, шавла-шавла
Иртет те пуйăс — таврăнать кив тунсăх.
Ал айĕпе пăхап анăçалла:
Ĕрĕхтерсе килмест-ши утçăм-тусăм?..

## XXIX

Çурхи ака-суха пуçланиччен
Ĕç выльăхне ӳт илтересчĕ тенĕн,
Каятпăр выртмана: ват ĕмпиччен
Ĕмĕтĕнче те кăмăл туртнă ен-мĕн...
Те чĕрĕ курăк шăршине сиссе
Хыткан утсем юртаççĕ лĕпсĕр-лепсĕр.
Улма чăпарăм та пырать сиксе —
Епле вăл пысăк! Типшĕм-ха, илемсĕр...
Анчах та — кур-ха!— пуринчен малта.
Аратлă айăр темĕн — чăн ертӳçĕ.
Юлнах пуль ашшĕ юнĕ ывăлта —
Халех пăхăнтаруллă чурăс куçĕ.
— Çакна пусасшăн пулчĕ бригадир,
Вилет тесе! — çиллессĕн чĕнчĕ ваттăм.
Шартах эп сикрĕм.—Чим... Мĕн тетĕн? Чир?!
Хăçан? Тен, ĕмпиччем, эс шӳт тăватăн?!
— Шӳт тетĕн?! Уншăн кĕтĕм парăма—
Тен, çылăха та... Пĕтеретчĕ арăм...
...Çав самантран улма чăпарăма,
Ĕмпиччене те ăшшăнраххăн саврăм.

## XXX

Эппин, «ял пуçĕнчен» шикленмелле!..
Ăшра — шалта! — çуралчĕ чăрсăр шухăш:
Вăрçа тарас Çилçунатпа пĕрле.
Утлантарма вĕрентĕп те!..—эп шуххăн
Шут тытрăм.
Акă — хатĕр те çула.
Ак — урхамах вĕçет хура хир тăрăх,
Харт! тулхăрса, пуçне сула-сула.
Ури сасси ун тикĕс — тăррăс-тăррăс!
Çул пирĕн — кăнтăр-анăç еннелле.

Умра — инçе-инçе! — паллана çăлтăр:
Чĕнӳллĕн вĕтлетсе иле-иле
Хăй çутилле çунать вăл йăлтăр-йăлтăр.
Юртса-утса кĕретпĕр вăрмана.
Каç сас-чĕвне итлеп-тăнлап пĕр хушă.
Ăçта-унта — мĕлке. Те тăмана
Хутран-ситрен ӳхлет... Кичем. Хăрушă.
Ак çывăхрах пек çитмĕл сасăпа
Ӳле пуçларĕ ушкăн выçă кашкăр.
Тен, таврăнас?.. Мĕнле питпе, сăнпа?
Вĕç, урхамахăм! Тукмаксем, ан хашкăр!

## XXXI

Ĕшенчĕ Çилçунатăм ир енне.
Сĕнксе пыратăп — тĕшрĕлме те хатĕр.
Çапах çитетпĕр чугун çул хĕрне.
Хĕрелчĕ шурăмпуç — хĕвел тухать-тĕр.
Хыçра — инçе!— тĕтреленет вăрман.
Урхамаха тăллатăп та... ӳкетĕп
Тĕм хĕррине. Сарма кашма пур ман.
Хутаççăма пуçелĕке чикетĕп.
Те пуйăс янраса килет, те пуç
Сĕрлет-кашлать—хĕн уйăрма. Э-э, пырĕ...
Уçăлаймасть, çĕленнĕ евĕр, куç.
Таçта вĕçет сăпкам... Рехет. Шеп. Ырă.
...Те пăчă пулнă сар хĕвел мунчи,
Вăрантăм та — тем калаçап хам тĕллĕн.
Ман çумăмрах лара парать мучи!
Çăварĕнче — йĕсленĕ кукăр чĕлĕм.
— Ăçта кайма хатĕрленет-ши? — теп.—
Эппин, вăрçа таран? Маттур! Мĕн калăн...
Эс çитиччен вăл чарăнать шетех.
Хăюллă çын тек çуккă тен пуль ялăн?..

## XXXII

Хуллен утать пĕр çумăн ик лаша:
Пĕри—çулта, тепри—тихи—çап-çамрăк.
Эпир—ик çын—пыратпăр тавлашса:
Пĕри—хĕрӳ. Ватти:—Эй, çитĕ! Çаврăн!—
Вăрçса илет ним тăвайман енне.—
Ялти ĕçре те харсăрлăх вăл кирлĕ!
Кам çăкăр çитерет çар çыннине?
Кам пил парать çĕнме? Çуралнă килĕ!
Ав, кур-ха: тăвăл хуçнă юмана —
Тымарĕ çĕртерен каять хунавĕ.
Пĕрле çĕнетпĕр ирсĕр тăшмана —
Эппин, пĕр пек салтак, хресчен мухтавĕ...
...Ял еннелле туртатăп чĕлпĕре.
Пит пĕçерет, çунать: кăштах, тен, намăс.
Анкартипе — вите енне: пире
Унта леш... шĕвĕр сăмсасем сăнаймĕç.
Ним пĕлмене перет килте анне.
Аппа анчах пăхать пит кĕвĕçӳллĕн —
Çиме ларсан, сĕнет хăй кашăкне.
Пăшăлтатать: — Мана та ил-ха ӳлĕм?..

## XXXIII

Ял лашисем, утсем — пин-пин ĕçчен,
Тав тăвăпăр сире паян е ӳлĕм.
Ир пуçăнса каçчен, сĕм-тĕттĕмччен,
Эсир ĕçре: хресчен, лаша—пĕр кӳлĕм.
Хырать йĕнерчĕк, хăмăт-и тивет,
Чи йывăр чух пурнатăр выççăн-туттăн.
Лавăрсене пит йывăррăн тиет
Кунçул тени — ак эп те тем те хутăм.
Тиха чухне эсир епле хитре!
Анчах... пит хăвăрт сăхăма тухатăр.

Çынла — темскер каласшăн пек пире—
Тӳпе çутиллĕ куçăрпа пăхатăр...
Ачалăх урхамахĕ — Çилçунат...
Пĕри — çапăçура, тепри ак çумăн
Утса-чупса мана тусла сăнать.
Епле ăна юратмăн, сума сумăн?
Вĕсемпеле тăванлă, пĕр ăрат
Ĕмĕтĕмри поэзи урхамахĕ
Тăван ялта, хирте çунат сарать,
Чăн пулнăн çутă шанăçăн юмахĕ.

## XXXIV

Хĕвел тухи-тухми çӳл валакран
Лаша шăварнă май ыйха та маннă.
Сасартăк... чим, ку кам?—тăкăрлăкран
Салтак анать аран-аран — аманнă.
Вĕç, Çилçунат, васкавлăн ун енне!
«Атте пулас?!»—чăл çиçрĕ çиçĕм шухăш.
Юрлаттарса илсе йĕс тӳмине
Чĕн чĕлпĕре кăрт-карт туртатăп шуххăн.
Атте-ши, çук-ши хирĕç килекен?!
Такам... паллаймăн. Е хăйса ыйтас-и?
Аттеçĕм мар, анаткассем иккен —
Хăр-тăлăх тенĕ мăнакка хавасĕ!..
— Пичче, леçсе ярас-и? — Эп... хамах.
Утас килет çĕр çийĕн васкамасăр.
Çитменнине ман пур ак... урхамах —
Чĕвен тăрать те пат! ӳкет вăл мансăр...
...Сар-симĕс тумлă ывăннă салтак
Хуллен утать — ем-ешĕл хир чĕрçийĕ.
Йăлт-ялт сиксе пырать туя-патак —
Те авăнать, те ӳпĕнет çĕр çийĕ...

## XXXV

Çурхи ака. Шăпах ак ик эрне
Ватти-вĕтти хирте — хĕрӳллĕ тапхăр.
Пĕр кӳлĕмре лаша, этем, ĕне...
Канма пĕлмест салтак чун кĕртнĕ трактор.
Ку — çĕнтерӳ аки! Сисет чĕре.
Чи йывăр чух хевте хушать çак туйăм.
Çĕн курăк валеçетĕп витере
Ĕç лашисем валли — пухсаччĕ уйрăм.
Хыпарçă чупрĕ кĕчĕ хашкаса:
—Утлан утна!—çуйхашрĕ вăл.—Яла вĕç!
Тăванăм, Çĕнтерӳ! — ыталаса
Мана чуптурĕ.— Ак эртел ялавĕ —
Çит пур çĕре, кашни касса, хире!..
Мĕн чул нуша кăтартрĕ, мур илесшĕ!
— Çĕнмен, çĕнеймĕн эс, тăшман, пире!—
Анăçалла юнарĕ вăл çиллессĕн.
— Э-эй, Çĕнтерӳ! — ĕрлеп йĕрсе-кулса.
Варр! варкăшать, çунать ялав хăмачĕ.
...Çак хĕрлĕ çулăмран çунат туса,
Вĕçме пуçлать поэзи урхамахĕ.

## XXXVI

— Эй, Çĕнтерӳ-ӳ! — вĕçет касран касса,
Кантăксене уçать хыпар янравлăн —
Тĕнче итлет ăна хавасланса.
Ялав аври вĕри—çунать пек аллăм.
— Эй, Çĕнтерӳ-ӳ! — çурхи курак-чавка
Ĕрлевĕ пек шăв-шавлă шкул картишĕ.
Ял тин кăна салхун курнатчĕ-ха —
Уяв ташши ташлать ун савăк йышĕ.
— Эй, Çĕнтерӳ-ӳ! — кĕрле пуçларĕ чан
Çӳлте — сăртра — ут витипе пĕр çумăн,

Чуна çĕклентерсе ярса: ян-ян!
Унпа сехре хăпартакан халь çук-мĕн?..
— Эй, Çĕнтерӳ-ӳ! — хир халăхĕ патне
Çитет Çилçунатран малтан ман сассăм.
Эп те çĕнтернĕ пек фашист йăхне —
Ыр хыпарпаваскатăп ак хаваслăн!
— Эй, айтăр ирĕк халăх уявне! —
Чĕнетĕп ак, ялавлă пĕлтерӳçĕ.
...Ватти-вĕтти васкать тăван ялне —
Кашни хастар, мухтавлă çĕнтерӳçĕ.

# ÇĔР ÇИНЧИ ИЛЕМ

## *Сăвăсем*

### Хăмăш юрри

> «Çĕнĕ юрă тухиччен ăна хăмăш юрлать, тет, вара çынсем те юрлама пуçлаççĕ, тет, анчах хăмăш юррине пурте илтмеççĕ, тет...»
>
> *Чăваш сăмахĕсен кĕнекинчен*

**1**

Чăштăр-чăштăр хăмăш, ешĕл хăмăш,
сарă кайăк савнă хăмăшсар.
Ĕмĕр-ĕмĕр ўснĕ хўхĕм хăмăл,
çивĕч хĕçўпе тек ан хăмсар.
Çурлапа килмерĕм — пусмĕ эрлĕк,
алхасса хуçмарăм чаканна —
курнăçса тăранайми чиперлĕх
илĕртсе тĕмсĕлтерет мана.

Çын юрлас юрра—чăваш каларăш—
хăмăшсем юрлаççĕ чи малтан:
тархаслатăп — сассуна кăлар эс,
эп тăнлам ăна чунтан-вартан.
Тивĕçĕм пулсан, шанса пĕлтерĕн
ĕлĕк-авалтан упраннине —
уçă кăмăлпа пĕрер-пĕрерĕн
хут çине куçарăп вĕсене.

## 2

Шăнкăр-шăнкăр юхăм хушшăн-хушшăн
шуххăн чĕтретсе силлет сана:
çӳл сассу янравлă хăвшăн, хумшăн —
мĕншĕн илтĕнмен хальччен мана?
Сĕркĕчпе вăшт! сĕртĕнсе илетĕн
çилĕн е хĕвелĕн хĕлĕхне:
çепĕç сан кĕввў хăрми илемшĕн —
витĕ-ши тӳрккесĕн хăлхине?..
Ĕмĕр çивĕч пулнă туйăм-сисĕм
чакнă-шим çак тарана çити?
Явкаланчĕ те сип-симĕс çиçĕм —
путрĕ тĕпсĕр тарăна çути...

## 3

Чăштăр-чăштăр хăмăшăм, чăтар кăшт.
шанăçсем сӳнмен-ха, ан хӳхле,
сарă кĕр çитсен, эс — ăш çунтармăш—
пулăн уçă сасăллă хӳкле.
Чи шалта упраннă вăрттăн çемĕ
куçĕ сăмаха, кĕвве — юрра.
Тăнламасăр вĕсене тӳсеймĕ
сăвăç тус çех мар, пĕр хытхура...
Калемпе тĕрленнине çĕн халлĕн
çырĕç алмазпа — вула кăна.
Илтĕ те пуç тайĕ ырă халăх,
аслă Атăл хăмăшĕ, сана.

* * *

Сип-симĕс хĕмлĕ çулăм чăл çутатчĕç
хĕвел савса лăпкана çулçăсем —
кĕр умĕн иртнĕ евĕр çивĕч таткăç,
вĕлтĕртетсе ӳкеççĕ... Çул — хĕлхем.

Мана саламласа ал çупнă çулçă —
хĕп-хĕрлĕскер — ура умне ÿкет...
Ун çумĕнчи сывпуллашса ал сулчĕ—
те пăшăл-пăшăл сассинче ÿпкев?

Хура вăрман юманĕ çÿллĕ тăррăн
чи юлашки çулçипе мар — такам
е тем санпа халь уйрăлас пек тăрăн
кун пек чухне эс, хÿтлĕх шыракан...

Кунçул — тĕлпулупа сывпуллашусăр
пулманнине пĕлсен те — канлĕ мар:
пĕри—сайра, тепри—ÿсет пек шутсăр...
Савăнăçпа сив тунсăх юнашар.

* * *

Эп шăкăл-шăкăл калаçу çеммин
симфонине каçса кайса итлетĕп:
миçе чĕлхе-ши халăхсен çемйин?
Тăнласчĕ, кашнине пĕлесчĕ тетĕп.
...Шап-шур сăхман,
хутаç,
тымар туя —
çÿресчĕ чаплă юрăç-сулçÿревçĕн
хăр-харсăр çĕр çинче,
чунри вăя
тăванлăха парса чи аслă евчĕн.
Пурнасчĕ сахалтан пĕр çичçĕр çул,
кашни çĕршыв-патшалăха çитесчĕ—
сăмах çине сăмах пухасчĕ мул,
«Ман халăхран пехил!» — тесе çиçесчĕ
тĕнчемĕрĕн чĕнÿллĕ çутинче,
кунçулăн ирĕк тăнăçлăхĕнче...

* * *

«Хĕвел ансан, çут çăлтăр илĕртет,
çын куçĕ илĕртет, сӳнсессĕн çăлтăр»,—
тесен те тутлă тунсăх тилмĕртет,
хăй çутисем сӳнсен... Епле чун чăттăр!

«Тен, эпĕ никама та кирлĕ мар?!»—
тесе пăшăрханатăн, ĕнтĕркетĕн.
Сĕм-тĕттĕмре — çутмасăрах хунар —
çунса çӳретĕн, савнине кĕтетĕн...

Мĕскер танлашĕ чун ăшшипеле
кун пек чухне? Чи илĕртӳллĕ шанăç
еӳнет умри хăй çутипе пĕрле.
Ак аллăмри чечекĕмсем та шанĕç.

Ӳс, ӳкĕнӳ! Хĕрӳлĕх çук пуль ман
шур каркăç леш енчи куçа чĕртмелĕх?
...Чечек çыххи сĕнетĕп кантăкран:
—Тухсам! Чунна чĕртме те çитĕ меллĕх!..

* * *

Шур çеçкине пыл хурчĕ сăрнă курăк
çемçе çу кунĕ çурт умне сарсан,
пĕрремĕш утăм тунă эп çарран
шăп çакăнта... Те çĕр, те эп халь урăх?
Çав ешĕллĕх —
çут сывлăмпа чӳхеннĕн —
ура тĕпне лекет ак çĕнĕрен!
Те çĕр тавра эп çаврăннă — çӳçенчĕк
ярса тытать чуна. Кам чĕннĕрен?
Тукун амантнă шаннă, вараланнă
типме пуçланă шăнăр курăкне.

Шăраннă евĕр çулăн вăрăм анĕ —
ун пуçĕнче çунса тăрать анне...

## Пĕр пĕлĕше...

Ĕнерхи куна питлерĕн шуххăн,
хăрăмпа хуратрăн иртнине.
«Чыссăрлать,—çуралчĕ хурлă шухăш,—
паттăр çын аслашшĕн яшлăхне...»

Паянхи куна вăрçса тиркерĕн:
кашкăр йăхĕ ик тĕс çех курать...
Шухăшларăм: «Ха, епле тискеррĕн
ашшĕ-амăш питĕнчен сурать...»

Ыранхи куна сăхса, чӳхетĕн
наркăмăшлă, юплĕ чĕлхӳне.
Тарăхатăп: «Усала чӳклен, тен,
ывăлун чи çутă ĕмĕтне...»

* * *

«Тăван-пĕтен пил-халалне ан итлĕр,—
вĕрентрĕç,— пурнăр хăвăр ăсăрпа».
Пĕр-пĕринпе вăрçа-вăрçа пит ипсĕр
ăс уйăрать çав мăшăр унтанпа...

«Юратуран хакли тек çуккă нимĕн»,—
асли ăс пачĕ тепĕр мăшăра.
Халь юрату упраççĕ иккĕн тимлĕн
ача-пăча сассисĕр пуш çуртра...

Пиллерĕç: «Иксĕлет темесĕр ĕçĕр
импе чăп тулнă савăш куркине!»
Ача та пўрт тулли, сăмах та вĕççĕр —
курса тăранаймаççĕ пĕр-пĕрне.

* * *

Е талкăшса, е танкăшса утатăп
уй-хир çутиллĕ айлăм хĕррипе.
Чăлханнă чўпĕк пĕлĕт — виçĕ татăк —
вĕçет çўлте, анчах та çул йĕпе.
Пăчăртанса тухать пек сивĕ нўрĕк
çĕрпе чул витĕр, ярт ярса пуссан.
Мĕнпе хавхалантарăп та вăй кўрĕп
халь хама хам?.. Пылчăкланать тусан.
«Умри инçет ытарайми чĕнўллĕ!» —
хĕрўллĕн йăпанатăп утнăçем.
Унта çитеп — тўпе çаплах пит çўллĕ,
малтан мала тарса пырать илем...
Анчах... хыçа юлни те — тĕлĕнтермĕш! —
сенкерлĕхре унччен хинчен хитре:
ун инçетне те илĕртўсĕр темĕн...
Çапах мал ен тĕмсĕлтерет пире.
...Кунçул унки-çаврăмĕнче сасартăк
çывхарчĕ пек умри, хыçри инçет!..
Ик аллăма ик еннелле эп сартăм,
тытас пек иккĕшне... иментĕм çех!..

* * *

Кĕмĕл чăрăш, ем-ешĕл çăкалăх,
тĕрлĕ тĕслĕ çеçке — капăр сквер.

Савăк ырăн! Умра — уçă алăк,
хунавран арка пек явнăскер.

Ĕнтрĕк çуттăн анать: тĕлпулушăн
ку — илемлĕ, чи селĕм самант.
Кĕтрĕм-кĕтрĕм—эс çук... Эй, ан улшăн,
пин çеçке çуракан асамат!

Ак папаклă тĕм витĕр куратăп:
эс васкатăн, пикем, эс килен!
Киленеп: «Ĕмĕр-ĕмĕр юратăп!
Кĕт-ха,— чееленеп,— кăшт çиллен...»

Пĕрчĕ тӳсĕм çук — хирĕç тухатăп.
Эс те ăшшăн кулса çывхаран.
Йăлт манса савăшма иккĕн хатĕр—
ăмсануллăн пăхаççĕ хыçран.

...Пиллĕ вăхăт! Чечек сăрнă алăк,
юрату укăлчи пулнăскер,
асăмра — сарăхмарĕ чĕр палăк,
шур юрпа витĕнсессĕн те сквер.

* * *

Çуркунне. Юр ирĕлет сий-сийĕн.
Хĕрхĕлтĕм тĕтре чĕтрет сан çийĕн.
Юратса чĕрĕлекен сăнна:
— Шурă хурăн! — терĕм эп сана.

Çитрĕ çу — пĕркентĕн симĕс çулçă.
Тĕрĕллĕ кĕпӳ кивелчĕ юлчĕ.
Те хăнăхнăран чипер сăнна:
— Шурă хурăн! — терĕм эп сана.

Кĕркунне. Палкать тĕссен пушарĕ —
çулçă хыççăн çулçă çунчĕ кайрĕ.
Те манайманран çурхи сăнна:
— Шурă хурăн! — терĕм эп сана.

Çитрĕ хĕл — пас ларчĕ те типтерлĕн,
хаш! сывларăн, усрăн туратна...
— Шурă мар эп, хура шурă...— терĕн,
хурăнăм, кӳреннĕ пек мана...

* * *

Шурай пек шурă шăкăрин шăнкав.
Çăл шывĕ тăрă.
Шăнкăртатать сив юхăмра шăнкрав,
Янрать тан пăрĕ.

Кăп-кăпăш мамăк виткĕç хĕррипе —
укаллă чĕнтĕр.
Касаççĕ вак сар каччă сар хĕрпе,
Пăр — чĕлтĕр-чĕлтĕр!

Ак ăсăнать витре — пĕрре, тепре.
Пăс çăмăл, çутă.
Тулли витресемпе яш çын тĕпре,
Çумра хĕр утĕ.

Пăхса илет те тусĕн куçĕнчен
Кулать хĕр ăшшăн.
Шур кĕрĕкĕ пӳ пăвăнчăкĕнчен
Пат татăласшăн...

Пас сăрнă йăлтăркка йăмра айне
Утса кĕреççĕ.
Эй, çут тĕнче, телей вĕсен килне
Çапла кӳресчĕ!

* * *

Тулли хӗвел, çур уйӑх тӳпере.
Ак-ак çеçке сурать шерепеленнӗ çӗмӗрт.
Хӗр-пикесем çур çитнӗçем хитре —
мӗн-ма иртсе пырать-ши çамрӑк ӗмӗр?

Ӳсет, ӳсет çул шучӗ — чун вара
çаплах вӑркать: çук уншӑн ватлӑх, канӑç.
Çын вӑйпитти чух çуйкӑнлӑх ӑшра,
чӗри тӳссен — савать, тӳсеймесен — ӳк,
ан вӗç!..

Шыравлӑрах, асаплӑрах — апла:
«Таса юрату мар!» — сӑмах çуратӗ шиклӗх.
Лӑплан — хӗрӳ чунна çӑварлӑхла,
ют йывӑç сулхӑнне вырнаçтӑр шилӗк...

...Савса курни пӗлет хавха мӗнне.
Пуш-пуш чӗре анчах кӑрт çурӑлать сасартӑк...
Юратӑва айӑплакансене
юратупа анчах питле эс, ар-тӑк!

## Кӗрхи юрату

Юрӑ евӗрччӗ çурхи сӑмахӑм,
йӗс çыруллӑ çулçӑ-шим кӗрхи?
Кӑшт пӑшӑлтатсан та уçӑ ахрӑм
кӗрр! кӗрлет пек — вӗçӗ пӳрт ыйхи...

Чун ӑшши чӗнет, тӗкет пек чӑрсӑр
çурӑмран ир умӗнхи сив çил—
эй, мӗнле ыталанмасӑр чӑттӑр
пӗр-пӗрне ик тунсӑх! Илтрӗм: «Кил...»

Ӳлмуҫҫи айне кӗрсе тӑратпӑр.
Пиҫнӗ, чӑмӑртаннӑ сар улма
тӑкӑнма пуҫлас пек шӑпӑр-шапӑр—
май ҫук вӑрттӑн-карттӑн хускалма...

Хумханать турат — тем хурлӑх уншӑн.
Умлӑн-хыҫлӑн тӑкӑнан улма
хӗсӗнсе иртет те пирӗн хушшӑн—
патлатса ӳксе — кусать ума!..

Ҫӗр чӗтрет пек! Йывӑҫ, лар, ан тӑпӑл.
Савӑк саманта упра, сайхах...
— Улмана ҫӗрле силленӗ тӑвӑл,—
ятлаҫать ирпе такам.— Ах-ах!..

* * *

Хӗвел тавра, ҫур уйӑх питӗнче
Юхать шур пӗлӗт — мӗншӗн пит инҫе?

Мӗскер пулса ҫӑвайӗ-ши ҫӗре? —
Ытла ҫӳлте, таҫтаваскать сӗре.

Пӑр мар, сипетлӗ ҫумӑр пуласси
Ҫухалнӑ пек — асса-хӗссе ӑшши...

Мӗнех, пулман-ҫке пӗлӗт уйӑрни:
Ӑҫта? хӑҫан? мӗн чухлӗ?—туйӑн-и...

Шансассӑн та ун ҫумӑрне, юрне—
Пӳлме тулли хывман хальччен пӗрне.

Чуна парса ӗҫлемесен — тырри
Чи меллӗ ҫул пулмасть ӗҫчен тупри.

...Хӗвел тавра, ҫур уйӑх питӗнче
Юхать шур пӗлӗт.
—Ан кай пит инҫе?!

Акса пӗтернӗ хыҫҫӑн пӗр кана
Лӳшкентерсемччӗ — типшӗнет ана.

* * *

Хурхуххин шап-шур сӗтекӗпе
ҫыртӑм виҫ сӑмах аллу ҫине:
ан тӗпче юри чӗне-чӗне
ҫепӗҫҫӗн, тӗш панӑн сар чӗппе.
Пирӗн ӳсӗм, пирӗн ен пики
чухлӗччӗ ҫак вӑйӑ-йӑлана.
Кӳренсех пуҫларӑн йӑлӑнма —
ҫавнашкал юнтармӑшсен екки...
...Хӑшпӗр тапхӑр выляса-асса
калама пулать чи тертлине:
пӗл тӑван хир тӑприне сапса
вӑрттӑн ҫырупа систернине...

* * *

Пепкенӗн евӗр, ҫепӗҫ те пымаклӑ
ик аллӑм ӑшшинчи хӑюсӑр алӑ—

те ачашлас, те чуптӑвас,
ҫӑтса ярас пекех хавас?

...Тин сунӑ сӗтпеле ҫуса пилленӗ
сана мӑн кукаму: курса киленӗ

сăн-питӳнтен, илемӳнтен
шăпа пӳрни... Иментĕн, тем...

...Кунçул—пин тĕрлĕ ĕç...
Хутлам-тумхаллă
ик аллăм ăшшинчи ĕшенчĕк алă—

те ачашлас, те чуптăвас,
те сăвă каласа мухтас?

* * *

Савăш кимĕ — сарă савăшнай.
Хум чӳхенĕвĕ çуткам, чĕнӳллĕ.
Сар кĕсмен тыт, харăс авăс — кай
савăк ишеве: тулли çĕн кӳлĕ.
Шупашкар пĕви çак кӳлĕрен
анлăрах та, шавлăрах та пулĕ—
ан ăмсан, пикеçĕм, ан кӳрен:
савăш киммисен пĕр евĕр çулĕ...

Савăнса эп турăм савăшнай
сарă хăмаран — пур вăрттăн ячĕ...
Ĕмĕт инçетне ишсе каясчĕ —
çĕр ямасть, умра илем нумай.
Савăш кимминче савни пулсан —
ял кӳлли те тинĕс евĕр аслă.
Эй, пикеçĕм, çепĕççĕн кулсам,
эпĕ авăсам—пĕçертĕр алă.

* * *

*Чăваш скульпторне*

Анлă Атăл — çут çул.
Çӳллĕ, чăнкă шырлан.
Хум якатнă кап чул
çĕкленет тăр шывран.

Тĕлĕнтермĕш пикен
пĕвĕ чул виткĕçрен
хăтăласшăн—курсам!
Пулăшма мел пур сан...

Эй, мĕнле кăларас
илеме тыткăнран?!
Шур чула, хурçă, кас,—
тух, пикеçĕм, вăран!

* * *

— Эй, мучей, ăçта каян?
Уяв кунĕ-çке паян...
— Карчăк çитрĕ çитмĕле —
парне илсе килмелле.

— Эй, мучей, мĕскер шыран?
Лар, ан ютшăн йӳç шывран...
— Килте парне çумалли
савăш курки чăп тулли!..

— Эй, мучей, ăçтан васкан?
Кил-ха, кĕлттех ларса кан.

— Питĕ вăрăм пулчĕ çул —
карчăк тунсăхларĕ пуль...

* * *

— Кăштах пилĕксене тăсса илер-и? —
хĕрарăм выртрĕ кăпăш çĕр çине.
Пыл хурчĕсен хăнкăрмине итлерĕ,
вара — чĕрçи хупларĕ тӳпене.
Хĕрарăмсем, хĕрсем хирте канаççĕ.
Сĕрлевлĕ хĕвелçаврăнăш ани.
Çил çăмламас çулçа çӳлтен сăнатчĕ —
ак ырă уçă варкăш лăпкани.

Хайне пăхса ӳстернĕшĕн тав тунăн,
пĕр хĕвелçаврăнăш, пуçне тайса,
çеçке çурать!.. Ак çулăмĕсем унăн
çут ирĕкре — епле хитре, таса!
Ак çурăлать тепри! Ав кăлт хускалчĕ
ун çумĕн симĕс чăмăркка папак—
çĕр илемне курса, йăл кулчĕ, канчĕ,
хĕвел енне пуçне çĕклет ак-ак...

...Хĕрарăм, хĕр хир тăрăх чăштăр-
чаштăр
утаççĕ — хĕвелçавăрăнăшсене
çупăрласа илеççĕ те ачашшăн
авса чуптутараççĕ пĕр-пĕрне...

Эй, тем те пултарать ӳнерлĕ алă!
Умра — ĕçчен ӳстернĕ чĕр илем:
чи çӳлтипе — тӳперипе — тăванлă
тăван уй-хирĕн сар хĕвелĕсем.

## Чуччу

*А. Миттова асӑнса*

Кӑптака ҫӳҫе айне
ҫакнӑ ял чуччу.
Тӑр-ха, ӗнӗк ҫутлӑхне
вӗҫтӗр ик чун чу...
Кам мӗлке теет сана?! —
ҫук, сӳнмест ӑста.
Чакӑл ту енче сӑнна
курнӑ пек таҫта...

Лӗпӗш чӗрӗлнӗ куна
уявлас тесе
килтӗм васкаса кунта —
куҫнӑ эс тӗсе...
Чӗриклетрӗ шӑлтӑрма.
Сулкӑч ҫип-ҫинҫе.
Вӑхӑт мар халь шӑп тӑма:
кӑмӑл — ҫил ҫинче...

Тинкерӳллӗ тӳсӗмре
тупнӑ килӗшӳ
упрансанччӗ ӗмӗре!
Тем, чун турӗ шӳ-ӳ...
Ӗмӗр саккине сулла,
самана, чу-чу! —
е — ҫӳле, е — аяла
вайкӑнать чуччу.

Ҫук тӳпе—калле-малле
сулӑм хевтипе
вирхӗнетпӗр темелле,
варӑнса тӗспе...
Ярӑнатпӑр... Пит чее
ыт-тӗкел вӑййи.

— Сарă лĕпĕш, пичеве!
Вырттăр çул туйи.

## Вăрăм элеги

Çанталăк сулăнать тӳлеккĕн кĕр енне.
Уçланкăри капан çĕн шăчă вĕçĕпе
ак-ак тивес пекех шултра çăлтăрсене.
Те вăрттăн çыхăну тупать чунпа тӳпе —
тăнлатăп, тĕшмĕртсе умри-инçетрине.

Пулать чечен самант ирпе кас хушшинче:
чарать те çăлтăрсем тустарнă тăвăла,
çӳлти, çĕрти усал вăя инçе-инçе
хӳтлĕхсене хупса, ялти ĕçчен çынла
йăвашшăн тĕлĕрме хатĕрленет тĕнче.

Иртет кун касиччен тӳсни, пыр пӳлĕнни.
Хĕрӳлĕх чакнă май таса тӳпе çути
сĕврĕлтерет çилле... Вăйли, хаяр пулни
халсăррине тивмест, сунарçă мар çătти...
Никам тĕкĕнейми йĕрке ку тейĕн-и?

Çĕр чăмăрĕ — сăпка: чуччу сикет пĕрле
тискер кайăкпала чи пĕчĕкçĕ чĕрчун.
Канать вăрман-орган, анчах ĕмĕрхилле
вулли-пăрăхĕсем хуллен янраççĕ ун:
çӳлти сассем—çĕре, çĕрти вĕçет çӳле...

Çын çех татма хăять çак аслă канăçа—
сĕмне çухатнă çын... Те тинкерӳллĕрен
мăч тутарма хăратăп йăмăхнă куçа;
çак ешĕл ырлăха лекмессĕн ӳлĕмрен
тĕнетĕп, çӳçенсе кайса, чуна уçса.

* * *

Чӳпěкленет ама тирекěн тумě.
Аçа тирек мăнаçлă капăртан.
Кас-кас килсен, каш-каш вěрсен çил хумě,
вěçет шур мамăк шур юрпа пěр тан.
Кӳме тěртет — хăй шухăшлă, салхуллă—
аллея тăрăх çамрăк сар аппа.
Ачи̧ вăраннă — пěкěл-пекěл, кулă:
те амăшне вăл йăпатать çапла?..

* * *

Йăл кулчě ир сар каччă куçěпе —
хěм сапрě, хěмлентерчě хěр чунне.
Кун чěнчě кахăр çӳçесем умне,
каç ярăнтарчě ешěл чуччипе.

Ир евěр иртрě кайрě çуркунне.
Кун вăрăмăш çех туйăнчě çулла.
Ытам тулли ачашлăх çуккине
тӳрех сиссе илмен те пулмалла...

Кěр каçě... Çил хашлатрě кăшт кăна —
шывра çӳçе пěркенчěкин çурри.
Çиçет — ак-ак путас пек юшкăна —
чи тарăн авăрта венчет çěрри.

* * *

— Тěнчене — вăл хăй мěнле — çапла
йышăн,— терě пěр ват çын мана.
Те кăшт чурăсланнине пула

тав тумарăм ăс паракана.
Тĕнчене — вăл хăй мĕнле — çапла
йышăнма пулать те пуль, анчах...
нушана епле хăнăхмалла?! —
вĕрентсем, сĕнӳ парсам, ăсчах...

— Этеме — вăл хăй мĕнле — çапла
йышăн,— терĕ çав çынах мана.
Тĕлĕнтĕм те — хушнă пек йăла
пуç тайса тав турăм ват çынна.
Этеме — вăл хăй мĕнле — çапла
курасси манран анчах килсен!..
Пĕр телей, пин терт уйăрмалла
ун чунне, ăсне уçас тесен...

* * *

Хăва çулçи çутинче
хавхаланса çӳрер-и?
Эй, хавас çут тĕнче
çав тери!

Хурăн çулçи çутинче
хурланмасăр çӳрер-и?
Эй, хӳхĕм çут тĕнче
çав тери!

Çĕмĕрт çулçи çутинче
çĕр çĕмĕрсе çӳрер-и?
Эй, çĕнĕ çут тĕнче
çав тери!

Йăмра çулçи çутинче
йăл-йăл кулса çӳрер-и?

Эй, йӑмӑх ҫут тӗнче
ҫав тери!

Ҫӑка ҫулҫи сутинче
ҫӑкӑнмасӑр ҫӳрер-и?
Эй, ҫамрӑк ҫут тӗнче
ҫав тери!

Юман ҫулҫи сутинче
юрла-юрла ҫӳрер-и?
Эй, юмарт ҫут тӗнче
ҫав тери!

* * *

Мӑскалпала виҫместпӗр телее...
Яш чух пӗлместпӗр вӑл мӗн иккенне,
чухлатпӑр ҫех... Ыр ӗмӗт ҫутине
ялкӑштарса кӗрсе кунҫул хӗлне,
сыхлатпӑр тӑвӑлта ун вут-хӗмне...

Хӑш чух шӑнса кӳтетпӗр шӑрӑхра
е тепӗр чух тара ӳкен вара
ир виҫ хӗвеллӗн ҫиҫнӗ хушӑра:
телей ун пек чухне — таҫта, умра...

Ӗмӗтрине шыратпӑр — тӗмсӗлсе,
шыранине тупатпӑр — тӗлӗнсе,
тупӑннине манатпӑр — тӗркӗшсе,
чакать телей кӑварӗ — тӗлкӗшсе.

Телей мӗнне чухлатпӑр ӑс пиҫсен,
кунҫулӑн йӳҫҫине тӗппи ӗҫсен,

пурнаç куна măскалпала виççен...
Мехел чакать, юлсассăн тăр-пĕччен.

Эппин, мĕскер телей? Кама — мĕнле...
Ăна тупас тен — ĕмĕтленмелле,
савма та, ĕненме те пĕлмелле,
ĕçре тар тăкмалла, кĕрешмелле!..
Măскалпала виçместпĕр телее.

* * *

*Давид Кугультинова*

Ту хысакне çĕкленнĕ пĕр айван
çуйхашнă, пуçĕ çаврăнса кайсан:
«Эп — никамран çӳлте! Епле аван!
Пуç лекрĕ тӳпене — этем, ăмсан!..»

Тепри — чăмса курса ейӳ кӳлле —
янрашнă: «Çитрĕм эп тĕпсĕрлĕхе!
Ак, тытрăм çавăнта!»—тĕлле-тĕлле
кăтартнă йăпăр-япăр сĕлĕхе...

Пĕлмен вĕсем çак чăнлăха хальччен:
ни тарăнăш, ни çӳллĕш çук тĕнчен...

* * *

Сарăтутлă сарă хĕр
сарă çурпа çуралнă—
сарă чечек, савнăран,
сăнне çапса хăварнă.

Хуратутлă хура хĕр
Хура кĕрпе çуралнă —
хура хĕрлĕ хурлăхан
хĕлхем сапса хăварнă.

* * *

Кун чăн та вăрăмланчĕ мар-и?
Ĕç пĕтнĕ пек. Мăнук таçта.
Ак тунсăх çулăхма пуçларĕ —
аптрарĕ карчăк, нараста.
Апат вĕри. Тусан та шăлнă.
Тула кăларнă кушакне.
— Чим, каялла кĕртес пуль — шăнĕ,—
тесе уçать кăшт алăкне.
Утса çӳрет. Ларать пĕр авăк.
Çыхасчĕ панăски чăлха —
йĕп-çип çук...— Ак епле вăл савăк
кану тени... Юратчĕ-ха
паян кунччен, анчах иркӳлĕм
(те чăн çак сисĕм, те суя)
темле чĕнӳллĕн, илĕртӳллĕн
умрах чилетрĕ кăсăя.
Пуш уйăхĕ тин çех çитсеччĕ,
çанталăк ăшăтсах кайман,
çапах çурхи хĕвел тивлечĕ
пӳртре чух сисĕнет аван.
Кассуйсене васкавлăн карчĕ,
васкавлăн уçрĕ çӳпçине —
вăрах шырарĕ темĕн карчăк,
тупса кăларчĕ кирлине.
Кулленлĕх кĕпине вăл хыврĕ,
виç енлĕ тĕкĕр çутинче
тумланчĕ те йăл кулчĕ: — Ырă!

Пике тăрать ун умĕнче!
— Тăвăртарах та,— пăшăлтатрĕ,—
каймасть пек, пĕшкĕнсен, çĕвви.
Ташлам пекки туса кăтартрĕ
тĕкĕртине — хавас кĕвви.
— Туя çĕлетнĕччĕ... Тухъя та
туяннăччĕ аран-аран.
«Тем ватăлманнăнах туятăп!» —
пăрр вĕçрĕ шухăшĕ пуçран.
Ак кӳнчĕк — туй кĕпин хĕвелĕ —
лăпкать ӳте, кĕрет ăша...
— Кур-ха, аннӳ епле илемлĕ! —
кĕрӳ сасси...
— Эй, тамаша!

* * *

Хĕл хаярĕ шăнтрĕ-ши куçа,
ӳкрĕ-ши мана усал хаярĕ —
икĕ тĕслĕн çех курпа каçа,
тĕнчене курма пуçланă мар-и?!
Юр çинчи вăрман, ял—йăлт хура.
Çутçанталăк хăй те хура шурă.
Кĕтĕм кĕтесрен, хăра-хăра,
пӳрт çутинелле — мĕлке мĕлт шурĕ...
...Урамран — пӳрте, пӳртрен — тула.
Хура шурă тĕс йăлт йăлăхтарчĕ.
Кĕр пушарĕн вутпуççийĕ тачă
хупнă чĕрлĕх хĕлхемне шала.
Пăрлă вулă сивĕ хăрăмне
шурă кĕл çине сапать ытарлă.
Кăчкă-шăрчăк çех çунат айне
çулăмсен вĕри тĕсне пытарнă.
Ялкăштарчĕ пĕчĕк çуткăça

хурӑн хупписен ҫурхах хаҫачӗ.
Суккӑрлатрӗ пек ҫути куҫа —
хӑвӑртрах ҫӗн ҫур ирне куҫасчӗ!

* * *

— Епле чипер, таса пикеччӗ!
Ҫуралнӑ пекчӗ ҫулӑмра!
Хитрех-ха! — мухтама пикенчӗ
хӑй тантӑшне ват ҫын умра.

Те куҫсӑр эп, те ҫук чун пилӗ,
те хӗн ӗлӗкелле куҫма:
кӳпченӗ карчӑк—ҫут сӑн-питлӗ
хӗр мар! — курнать халь куҫӑма.

Ҫапах, ҫапах мӑнаҫлӑх сӗмӗ
ҫук мар унра — анчах мӗнре?
Илемлӗ карчӑк вӑл... Ҫук, кӗмӗ
хӗр сӑнлӑн ҫӗнӗ ӗмӗре.

— Вунҫиччӗре чухне курсанччӗ,—
тет ват юлташ,— ман тантӑша!
...Инке пике пулсан, эп—каччӑ,
ӗненӗттӗм... Эй, тамаша!

«Миҫе ҫулта?» — тесе ыйтаймӗ
арҫын хӗрарӑмран, апла...
ури айне — чечек ытамӗ,
хевтеллӗн ҫиттӗр ҫӗр ҫула.

* * *

Илемпе тирпей хуҫи — вӑр-вар, ёҫчен пике,
Илемпи ятпа тӗл пултӑн шӑпамра — тав, чиперкке!

Тав, савни, тус, кил ҫути! — эс ҫех ҫуна-ҫуна
йӑпатан, хута кӗретӗн е упран ачаш чуна...

Шурӑхман куҫ—вичкӗнех, кӗвве чухлатӑп-ха.
Хӗрӳрех пек туйӑм-сисӗм. Кӗвӗҫни те кӑлӑха...

Ҫут тӗнче — илем тӗнчи,— тесеттӗн, Илемпи.
Иккӗлентӗм — ӗнентертӗн. Мӗнлерех — пӗлейӗп-и?

Ман ҫумра савни пурри — умра илем пурри.
Тав, пикеҫӗм, Илемпиҫӗм,—илемпе тирпей турри.

* * *

Епле черченкӗ папаксем кӑларчӗ,
йӑм-хӗрлӗ тӗслӗччӗ ҫулҫи, туни.
Мӑян пулассине пӗлмен — кӑкласчӗ:
хытать йӑран — илемлӗ ҫум пусни...

Асаплӑн шӑтрӗ — йӗплӗччӗ, лутраччӗ.
Касса амантрӑм — ӳсрӗ кавсӑлса...
Ҫӗре кӑпкалатса пӑхса усрасчӗ,
пӗлсен йӑм-хӗрлӗ роза пуласса.

* * *

Сӑмахпала кунҫул нӳсне
куллен туйса пыратӑп имӗш.

Ман йывăç чарăнман ӳсме,
çапах парать сĕтеклĕ çимĕç.

Тымар çумне тымар — çĕрте,
çӳлте турат кĕр-çур ансаттăн
ӳссен, папак чĕрте-чĕрте,
çуллен илпеклĕ пулĕ садăм.

Нӳс — тĕрлĕрен: тутли, йӳççи...
Тиркес-и тутанса курмасăр?
Чи тутлине, тус, эсĕ çи.
Пиçменнине ан татăр мансăр...

## Тĕл пулар-и — паллашар-и...

Тĕл пулар-и — паллашар-и,
паллашар-и — туслашар-и
кăмăл уçă чух,
кăмăл уçă чух,
кăмăл туртнă чух?

Паллашар-и — туслашар-и,
туслашар-и — калаçар-и
кăмăл туртнă чух,
кăмăл туртнă чух,
кăмăл ырă чух?

Туслашар-и — калаçар-и,
калаçар-и — савăнар-и
кăмăл ырă чух,
кăмăл ырă чух,
кăмăл çепĕç чух?

Калаçар-и — савăнар-и,
савăнар-и — савăшар-и
кăмăл çепĕç чух,
кăмăл çепĕç чух,
кăмăл çитнĕ чух?

Савăнар-и — савăшар-и,
савăшар-и — савăнар-и
кăмăл çитнĕ чух,
кăмăл çитнĕ чух,
кăмăл çиçнĕ чух!

* * *

Питӳ çинче ирччен ик лĕпĕш ларчĕ,
ĕшеннĕ парăс çунатне усса.
Куç ăшшипе хаваслăн ачашласчĕ
е вăрттăн — сĕртĕнмесĕр! — чуптуса.

Çывхартăм çех — вирт вучĕ евĕр варкăш
çĕклерĕ мăшăр парăс-çуната.
Лĕпĕшĕмсем, пĕрне-пĕри савар кăшт —
ан тарăр сĕмлĕхе, таçта юта...

Тӳпе, чечеклĕ улăх, тĕпсĕр кӳлĕ...
Малта—ик лĕпĕш, иккĕш—хыçалта.
Ак çывхараççĕ! Каç мĕлки-и пӳлĕ
тăвата мăшăр парăслă çутта?!

* * *

Çăвар тути пĕтет... Сиплен çĕр тĕрлĕн,
çич курăк чейĕ ĕç, тутан эрех,

тӑвар сап, пыл е ҫу сӗр — хытӑ чӗллӗм,
темскершӗн чӑмланать тӑмпа пӗрех...
Тӗлӗксенче хыпса-ҫунса ҫӳретӗп
темле пушхир шӑрӑхӗнче пӗччен.
Сисеп: ҫитет им-юмланма черетӗм —
Ҫула тухас чӗлхе чулланиччен.
...Васка-васка уйчӳк умне ҫитетӗп —
тӑван ҫӑлкуҫ хӗрне ӳпне выртап.
«Сӗтеклӗ пул, сӑмах! Чӗреҫӗм,— тетӗп,—
ҫак сиплӗх шывӗн ҫӑлӗ евӗр тап!»

* * *

Атӑл хӗррине утса килем —
эй, илем!

Лӑпкӑн инҫете пӑхса илем —
эй, илем!

Шур ҫилхеллӗ хум шавне итлем —
эй, илем!

Ҫӳл ҫӳҫе ҫӳҫне-ши ҫивӗтлем —
эй, илем!

Чи хитре чечек татса илем —
эй, илем!

Чи чипер хӗр сукмакне пӳлем —
эй, илем!

Ҫепӗҫҫӗн ӑна тем-тем пиллем—
эй, илем!

. . . . . . .

Эй, илем!

* * *

Куйкăрăшăн çутă çунаттин
ăшă варкăшне пит-куç туйсассăн,
«Эп — телейлĕ çын!» — тесе халь тин
янăраймăп йăнкăр-йăнкăр саслăн.

Мĕн пĕр çын телейĕ, çумрисем
манпала пĕрле савăнмасассăн?
Эп — хавас иккен, çынсем — кичем,
эп — кулам, çынсем — сывлаччăр ассăн?!

Куйкăрăшăн çутă çунаттин
ăшă варкăшне туйми пулсассăн,
«Эп — телейсĕр çын!» — тесе халь тин
ўпкелешмĕп чĕнкĕл-чĕнкĕл саслăн.

Эп телейсĕр çын шутне кĕрсен
ман тавра сив çиçĕмсем ан çиçчĕр.
Эп телейлĕ чух кĕвĕçскерсем
сивĕ сăмахпа мана ан çиччĕр...

* * *

Инçетелле пăхатăп алă витĕр —
сенкер ката тўлеккĕн тĕлĕрет.
Капланчăк пĕлĕт аслати кĕввисĕр,
шур тăраллă ту евĕр — тĕлсĕр рет...
Тахçан тĕлленнĕ курăну — çут сăнлăх.
Темле çĕршыв — шап-шур тĕпеклĕ ен —
ўсет мăнаçлăн, çывхарать пит сăлăк.
Тусен тăрри, тўпе хĕрри кĕрен.
Чăн мар çав сăнлăх — пурпĕр, пурпĕр темшĕн
тĕмсĕлтерет, чĕнет... Ăшра—артак.

Шухăшпала эп ту тăрне çитесшĕн —
пулса курасшăн чи çӳлте пăртак.
...Шур пĕлĕтсен катрамĕ пуçăм çийĕн
иртсе каять. Тӳпе те тăп-тăрах.
Тăван тавралăх — эп таçтан тин çитнĕн —
чуна туртать, туртать пек хытăрах.

## Тав, мухтав, тăванăмсем, сире!

Тав, мухтав, тăванăмсем, сире
чун кĕртсе юратнăшăн çĕре.
Ĕмĕр-ĕмĕр пурнăр тĕнчере!
Пуç таятăп: тав, мухтав сире.

Тав, мухтав, тăванăмсем, сире,
капăрлатнă çутă пӳртĕре.
Ĕмĕр тулăх пурнăр тĕнчере!
Пуç таятăп: тав, мухтав сире.

Тав, мухтав, тăванăмсем, сире,
савăнăçлă юррăр-кĕввĕре.
Ĕмĕр ирĕк пурнăр тĕнчере!
Пуç таятăп: тав, мухтав сире!

Тав, мухтав, тăванăмсем, сире,
килĕшӳллĕ, йышлă çемйĕре.
Ĕмĕр туслă пурнăр тĕнчере!
Пуç таятăп: тав, мухтав сире.

# АЛĂРИ АСАМАТ

*Поэма*

## I

Хĕвеллĕ çумăр юрласа лӳшкерĕ.
Сасартăк — ял варне ӳкес пекех! —
Çиçме пуçларĕ асамат кĕперĕ.
Эп ларăймарăм кив пӳртре текех.

Вĕçтернĕ май çемçелнĕ курăк тăрăх
Шарлашкасен шывне чăрт! сирпĕтсе
Сиккелесе илетĕп тăррăс-тăррăс,
Кĕтрет патне çитмен-ши-ха, тесе.

Паласĕ ун — умрах çиçет! Хĕмленнĕ!
Çунатланса ун çийĕн çӳлелле
Çĕкленессе эп чăннипе ĕненнĕ —
Çĕр туртăмне туймастăп темелле.

Епле илем умра! Унта çитесчĕ
Çак самантрах — вара шур хут çинче
Тĕссен килĕшĕвне уçса чĕртесчĕ
Çав илеме: кур, тĕлĕн, çут тĕнче!

## II

Мĕн чухлĕ сăрă! Асамат кĕперĕ
Çич тĕслĕ текенскер айван, куран? —

Ытарлӑ ҫутҫанталӑкӑн ӳнерӗ
Тӗссен хутшӑнӑвне тартать унран...

Ҫырма хӗрне ӗрӗхтерсе анатӑп
Ҫара уран, ҫӗре аран лексе,—
Пит тимлӗн тӗлӗнтермӗше сӑнатӑп,
Ӗмӗтӗмри тӗлпулӑва кӗтсе.

Пӗве умне ҫитсессӗн асӑрхарӑм:
Умри илем татах ҫӳлте, инҫе! —
Ҫаплах вӑл илӗртӳллӗн, шӗл-кӑваррӑн
Чӗнет тӗсӗсемпе ҫиҫе-ҫиҫе.

— Ӑҫта таран?! — кӳренӗҫлӗн, салхуллӑн
Ӗсӗклесе чӗнетӗп.— Кӑшт ансам?!
Тен, вӑраха пыратчӗ пуль ҫав хурлӑх —
Килетчӗ ушкӑн пӗлӗт капланса...

## III

Ачаш ачалӑх!.. Терчӗпе телейӗ
Ылмашӑнса пырсассӑн та кӗҫех
Епле ун ӗмӗчӗ таса тӗллевлӗ!
...Асамата кӗтеп — ак-ак вӗҫеп!

Анчах лӑпка-лӑпка ҫапла каларӗ
Ял асамҫи — Хура Мӗтри пичче:
— Кур: асамат, сӳнсе, ҫӗре тумларӗ —
Шыра тӗсӗсене эс ҫӗр ҫинче...

Эп лӑплансах ҫитменнине кура-ши:
— Атя-ха,— терӗ,— тимӗрҫ лаҫҫине.
Эппин, эс—ҫӗмел пуҫ—Энтип тавращӗ?
Илтсеччӗ сӑвӑлла калаҫнине.

Асаннӳне ман ӳсём: «Сар хěр»,— тетчě,
«Сар каччă»,— тетчěç аттӳне ялта.
Хури, сарри... Хěрӳ вутра хěртен те —
Пулать пěр тěслě çирěппи йăлтах...

Шухăшласан, кашни этем,—пěл, шăллăм,—
Асамата илесшěн аллине...
Шалта хускалчě тěкě шăкăлт-шăкăлт!—
Илем тěнчи уçать-ши алăкне?!

## IV

Эй, тимěрçě лаççи — асамăç пӳрчě!
Ак тав тăватăп ырă мехеле:
Кунта кěме тахçан ман кăмăл пурччě —
Чăнах илемлě ăшě ун епле!

Мěскер-мěскер кăна кунта курмастăн—
Ěç хатěрě анчах çěр тěрлě, тен?
Кашнин пěлтерěшне уçасшăн ăстăн —
Асли мěн каласса çунса кěтен.

Сехěрленсе те тěлěнсе итлетчě
Чун чан янравě евěр сассене.
Халь — çиçěм сирпěтсе султан ӳхлетрě,
Тěрлерě мăлатук çине-çине.

Халь — вěркěч авăрне мана тыттарнă!
Ăна аялалла пусмассерен —
Вулкан çăварě магмине тустарнăн —
Сывлать пек вут хăсса вěре çěлен...

## V

Вучахалла пăхатăп та куратăп:
Ак çакăнта-мĕн аннă асамат!
Çак тĕссене нимрен ытла юратăп —
Тав, ĕмĕтрен чăн тунă ыр самант.

Илемлĕн улшăнать пĕр вĕçĕм çулăм —
Е хĕрлĕ вăл, е симĕс те сенкер.
Çын аллинче ĕçлет вăл тăрăшуллăн —
Хăрушă мар! Çакна, Энтип, сĕнкер...

Тарланă эп, çапах епле хаваслă —
Хаш-хаш! сывлаттаратăп вĕркĕче.
Эп çутçанталăк евĕр халь хăватлă —
Çĕн хĕвелсем çутас пекех кĕçех...

## VI

Мĕтри пичче хĕскĕччипе типтерлĕн
Илет вутри хĕп-хĕрлĕ тимĕре,
Авать те лапчăтать ăна ӳнерлĕн —
Йĕр хăварса вĕçет хĕм тĕттĕмре.

Шăп çавăн чух чунтан савма пуçларăм
Çын чĕртнĕ асамат кĕперрине.
Чĕрĕлĕхри чĕр сăнсене куçларăм
Ăнкарнă май вĕсен килĕшĕвне.

Ват çын сăмахĕ маншăн пулчĕ имлĕ:
Этем те çутçанталăк ĕçĕнче
Сӳнми илем палăрăмне эп тимлĕн
Шыра пуçларăм аслă çĕр çинче.

## VII

...Калча йĕппи хĕрсе çитсе шăтсассăн,
Ӳссе кайса пучахлансан хитре,
Эп вăрттăн ăмсанса сывлатăп ассăн,
Куçа карса илет вĕри тĕтре...

Мĕн чухлĕ тĕс хирте! Ĕçчен пĕр вĕçĕм
Тĕрмешнине сăнатăп савăнса.
Ун çутçанталăкпа пĕр шайлă ĕçĕ
Пырсанччĕ ĕмĕр-ĕмĕрех ăнса!

...Вĕçсе сĕм пĕлĕтсен валемĕ айĕн
Васкавлă кĕмĕл кайăкпа инçе,
Çĕре çӳлтен-çӳлтен савма пит лайăх,
Рехетленсе, тĕнсе çул сăпкинче.

Каçатпăр асамат кĕперĕ урлă!
Шеп курăну! Анчах та чĕрене
Темскер пăвать те — шухăш пăлханулла,
Туртать, туртать темле вăй çĕр енне...

## VIII

Нимрен ытла хĕвел ĕçне сумлаттăм.
Вăл — тимĕрç пекчĕ, эп — ун шăкăрчи:
Тĕнчен чи хӳхĕм тĕслĕ асамачĕн
Ăсти пуласшăн эп — чăваш ачи!..

Мĕн калăн, тĕслĕх чăн та пит чиперччĕ.
Халь хирсенче хум хыççăн хум куçсан,
Тĕл пулчĕ урăх асамат кĕперĕ:
Тĕкленнĕ чĕпсене кĕрхи çилпе.

Тухатăп улăха пыл çунă хыççăн,
Кĕретĕп-и вăраннă вăрмана,
Пухса илессĕм килĕ ывçăн-ывçăн —
Çĕр хăй мĕнпур тĕсне сĕнет мана.

...Тĕнче чăвашшăн ĕмĕр-ĕмĕр чунлă:
Элчел çитсен те кайнă вăл — вилмен...
Йăлт — йывăç та, çăлкуç та, вут та,
чул та —
Чĕрĕскерсем, унран типшар кĕтмен.

Килес этемшĕн юлтăр пур иленкĕ —
Чечек вăййи, çаран, каш-каш вăрман.
Тен, çавăнпа эп илеме иленнĕ,
Ниме те, никама та тĕп туман...

## IX

Вăрман. Кĕр чĕртнĕ сăрăсен пушарĕ.
Тав уявушăн, чĕрĕлĕх, сана!
Кунта ан çиттĕр урăх вут-хĕм шарĕ —
Çунсан та çунтăр тĕс шевли кăна.

Эй, сăррисем! — Кала-ха, çутçанталăк:
Ăçтан тупатăн эсĕ вĕсене?
Килпетлĕ ăвăс... Ватă йывăç, тайлăк,
Тӳнес пек тĕршĕнет юман çумне.

Анчах епле хаваслăн, тараватлăн
Çулçисене вăл парнелет çĕре!
Çухатусемшĕн кулянмасть-тăр ватлăх:
Кашни çулçи ун — çулăмлă чĕре.

Шур акăш евĕр хурăн та вĕçтерчĕ
Тĕкленнĕ чĕпсене кĕрхи çилпе.

Пике-пилешĕн те çук пулĕ терчĕ —
Шăрçисене тирет çĕлен çиппе.

Уяв тумне тĕрленĕ, пӳштĕр сăрнă,
Хăлхи алки тата епле хитре! —
Туя каймаваскать пек нар пӳ-сăнлă
Инке-кăпчанкă хӳтĕ ĕшнере...

## X

Çак ырлăха, çак илеме тирпейлĕн
Упрасчĕ пирĕн ĕмĕрсем валли —
Пĕр калчана, пĕр турата тиркевлĕн
Ан тĕкĕнтĕрччĕ чунсăр çын алли.

Анчах та çын тени хăш чух киревсĕр.
Те вĕчĕхсе, те супăшса йӳтет?
Сиссе те, сыхласа та ĕлкĕреймĕн —
Чĕрĕлĕхе çĕртет, хăртать, вĕтет...

Мĕн уншăн çутçанталăк?! Хăй — «хуçа»...
Çĕр капăрлăхнелле куçа-куçа,
Сив чунлăскер, вăл тĕп тума ăна
Хаяррăн хатĕр — ирĕк пар кăна...

## XI

...Ун чух çанталăк тăчĕ шутсăр шăрăх.
Хавшарĕ йывăç. Ĕнĕхрĕ ана.
Кĕтмен çĕртен ӳкер сӳнмен пĕр шăрпăк —
Çав самантра вирт кайĕ таврана.

Хула çывратчĕ. Канлĕх. Кам шиклентĕр?
Сасартăк репродукторта: «Пушар!

Пурте пĕр харăс, пĕр пулса çĕкленĕр —
Вăрман çунать! Васкар — çăлма тухар!..»

Ват çын каларăш, вăхăчĕ пĕр ластăк
Иртсеччĕ — халăх пухăнчĕ вăр-вар.
Мухтавлă ветерансемле шутлас-тăк,
Десант валли ак хатĕр те çур çар.

Ĕçри — ĕçрен, туйри — туйран васкаççĕ.
Мĕн чухлĕн тутлă ыйăхне татни?
Салтак пулнисемпе пĕрле яш каччă
Харсăрланать епле—куратăн-и?

## XII

Каçса çĕршер-çĕршерĕн Атăл урлă
Кĕретпĕр тамăкри çапăçăва.
Хăçан вут-çулăм çакăн евĕр урнă?!
Мĕскершĕн шăршă çакăн пек çăвак?!

Тӳпе те, çĕр те, сывлăш та хĕрелнĕ.
Чун сӳлетет: юлман-ши тăр-пĕччен?!
Вĕре çĕлен пин пуçлă, пин хӳреллĕ—
Тискеррĕн чашкăрать мĕнпур енчен.

Тӳнсе каять те кăмрăкланнă йывăç —
Кĕл-тĕтĕм çĕкленет тӳпе таран.
Умра, хыçра, çӳлте, ăшра вут... Йывăр!
Сывлатпăр пăчăхса аран-аран.

Тин çех вирт кĕтӳне хупăрласаччĕ —
Халь хăй вăл тыткăна илет пире.
Тин çех вут-çулăм сылтăмра асатчĕ —
Ак çавраçилĕ хирĕç ĕшнере.

## XIII

Кӗрлет хăрушă çулăм. Вăхăт-вăхăт
Вӗçет пуç çийӗн мина — вутпуççи.
Мекӗрленет бульдозер — хурçă вăкăр,
Çӗре хирет ун мăйраки-çӗççи.

Ĕçлеççӗ пуртă, кӗреçе те пăчкă.
Брандспойт шыв пӗрӗхет. Пушар сӳнет!
Минӗретет йӳç сӗрӗм. Шутсăр пăчă.
Ак йăванать пӗри, тепри тӳнет...

Анчах — чакмастпăр, ӳкессе пӗлсен те,
Тискер вăя памастпăр алхасма:
Вăл, чармасан, йăлтах çунтарӗ, ӗнтӗ,—
Чӗрӗлӗхе пултарӗ тӗп тума...

## XIV

...Виç талăкран вут парăнчӗ — пăс пулчӗ.
Вăл аснă, урнă вырăн хуп-хура.
Çулне унне ĕçчен, хастар йыш пӳлчӗ
Чи кирлӗ чух пӗрлешнине кура.

Атака хыççăн çурăк, çунăк тумлă,
Хура пит-куçлă йыш канма ларсан,
Ахаль шывпа пирус йӳççи те тутлă,
Паллах, пăсмасть ытти-хăтти пулсан...

Те кăмăл çӗкленни май пачӗ — темшӗн
Эп куртăм çӗнӗлле ĕçченсене,
Çак çӗр çинчи ытарайми илемшӗн
Вута чăнах та кӗнӗскерсене.

## XV

Мăкăрланать хура, пуш-пушă лаптăк
Арлан тăпри таран çĕр çуннăран.
Ўсейĕ ашкăрса, тӳрех калас-тăк,
Кунта пиçен те кикенпе мăян.

Кашни пушар вăл — пĕчĕк Хиросима...
Çын айăпне пула сиксе тухсан,
Ĕçхалăхсăр пуçне никам та сирмĕ
Хăрушă синкере нихçан, нихçан...

Те çавăнпа çулла е кĕрлĕн-çурлăн
Сехре хăпать тӳпе кĕрĕлтетсен:
Мĕн пулĕ Прометей парни — вут-çулăм
Тискер эсрелĕн аллине лексен?!

Паллах, ăспа ырра эп ĕненетĕп,
Шанатăп халăхсен пуласлăхне.
Сăввăмсенче те упрама чĕнетĕп
Çынпа ыр çутçанталăк туслăхне.

## XVI

Çилсем тӳпен шур мамăкне арлаççĕ —
Хĕл виткĕçĕ тĕртесшĕн пулмалла.
Чечек тĕнчин çут хапхине те тачă
Хупать сив çил — ак-ак юр лармалла.

Такамшăн çак шеп вăхăт чухăн пек-тĕр,
Кичем пуль хăшпĕрне шупка кĕрте.
Анчах çап-çут тĕсрен пулать-çке спектр:
Курма пĕл — сăрă пур мĕнпур çĕрте.

Хирте ешерчĕ уçăм — симĕс шуçăм.
Сап-сарă улăм урисен çути

Чи тěттěм каç шевле сапать пек уççăн—
Патнех пырсассăн курнě йěп çăрти.

Пěсехине ак илемлетрě карăк,
Асаматран мăя туса ярса.
Мěлтлетрě тилě ěшнере каваррăн.
Вăрман кěтет пире палас сарса.

Умра — çăкаллă вар. Асра — çу ирě:
Типсе çитмен-ха сывлăм, çавăнпа
Çеçкеллě курăка çулатăп вирлěн
Çěлен сăнни пек çивěч çавапа...

## XVII

Çăвар типсен — валак умне. Вăл — сывăх.
Тапса тухать çăлкуç сăрт айěнчен.
Тултар та шăнкăр-шăнкăр йěкěр ывăç—
Тутан çěр сěтекне ăш каниччен.

Пěррехинче асаматпа имлерěм
Унта эп ăшăрханнă инкене,
Унччен илтмен ачаш сăмах итлерěм —
Çитмерě йěкěр ывăç иккěне...

Анчах та хальхинче вар тěпě — шурлăх.
Валак та çук—чул çех выртать умра.
Ун çамкине пěртернě тарăн шухăш...
Каçар, çăлкуç, çитменшěн вăхăтра.

Каçар яш чух йăмра лартма пěлменшěн
Хўкле сассиллě шарлашку хěрне.
Халь каçару ыйтма саманчě мелсěр:
Çухатнине тупаймăн ěмěрне...

## XVIII

...Ҫӗн ҫул мана Чӑвашъене ҫитерчӗ —
Пикентӗм ҫӗр алтма, бетон ҫӑрма.
Тӑван ҫӑлсен шывне савса ӗҫтерчӗ,
Вӑй пачӗ йывӑр чух тӳсме-чӑтма...

Ҫуртсем те илемлетрӗм, электрон та
Манпа туслашрӗ аслӑ заводра.
Илентерсессӗн те редиф* е рондо**,
Ҫӗнӗлӗхе мухтарӑм сӑввӑмра.

Мухтарӑм ҫех-и? Ҫеҫпӗл хушнӑ евӗр
Ӗҫлерӗм эпӗ ҫанӑ тавӑрса.
Тар тӑкрӑм чун хушнипеле, хистевсӗр,
Ӑҫта ӗҫ йывӑр — ҫавӑнта тӑрса.

## XIX

Умра—чӑваш театрӗн ҫут керменӗ.
Хӗпӗртесе кӗретӗп ҫула май.
Кунта Нарспипеле Сетнер килмен-и?!
Тен, ҫӗн балет пуҫланнӑ? Ҫын нумай.

Асамлӑ кӗвӗ. Балерина — акӑш.
Ишет! Епле кӳлемлӗ кӳлепи!
Епле черчен! Шур тумӗ — акӑш-макӑш!
Сывламӑп — чӑнкӑрт! ванӗ илемпи.

Кунта та аннӑ асамат кӗперӗ.
Кунта та — вӗҫсӗр ҫӗнелӳ тӗнчи.
Пике — вӑранчӗ! — хускалать чиперрӗн,

* Тухӑҫри тӗрӗк чӗлхиллӗ халӑхсен поэтикин терминӗ.
** Франци сӑввисен форми.

Чёрни вёçне тăрать — ун ӳтёнчи
Хавха шырарĕ кĕвĕ, çунатланчĕ,
Çĕкленчĕ, вĕçрĕ, вĕçрĕ çӳлелле:
Асаматран çул турĕ темелле...
Ăна шырарĕ йăрăс пӳллĕ каччă.

Кашни хусканура — çĕн туйăм, шухăш,
Сӳнми ачашлăх, ирĕклĕх, илем!
Мĕн чул хĕрӳлĕх, çамрăклăх та шухлăх!
Тав та мухтав сана, ăста этем!

## XX

Çанталăк вăл е тĕксĕм, е хĕвеллé...
Кунçул та, çĕр те, чăнлăх та — йăлтах
Ырми-канми çĕнетнипе илемлĕ.
Эй, пулччăрччĕ килес кунсем йăлттам!

...Сисместĕн те — яш чух юрланă маршăн
Сатур кĕвви сăвва пырса кĕрет:
Комсомолла ударлă стройка маншăн,
Салтак каларăш, пулчĕ малти рет.

Мухтавсăр марччĕ пирĕн пилĕкçуллăх —
Хастаррăн кӳлĕнеттĕмĕр ĕçе.
Тухас пекехчĕ çăвартан вут-çулăм,
Çапах манман чи пысăк тивĕçе.

Хăюллă, уçă кăмăллă пулнишĕн
Чипер хĕрсем юратнă пуль пире...
Чунра йăва çавăраймастчĕ нишлĕх.
Тухманччĕ хăркăна хальччен пĕрре.

Хавха сăмах — ĕненекен чĕрешĕн.
Çулсем кăшт сивĕтсессĕн те ăса,

Çĕннишĕн яш чухнехилле кĕрешĕп,
Вилсен те вилĕп илеме савса.

## XXI

Ӳссе, пиçсе çитсен, кĕтрет шырамăн
Шухăшласа кăларнă тĕнчере.
Хĕвел лăпканă Çĕр те—чĕрлĕх амăш—
Чăн илемпе çех илĕртĕ пире.

...Çавал енче — те çурçĕрĕн шур каçĕ? —
Кăвак хуппи шевлиллĕ çутăсем.
Çынсем валли çĕн асамат шыраççĕ
Унта тĕпчевçĕ-ăрăмçă туссем.

Вĕсен хули мана вучах чĕрттерчĕ
Шур çуртĕнчи пĕр ăшă кĕтесре.
Ан сӳнтĕр унăн асамачĕ! Терт те
Ан хуçалантăр ман кĕрекемре.

Халь маншăн аслă çĕнелӳ кĕрлевĕ
Чăнах та паттăрла симфониех.
Хĕвел ытамĕнче-и е çĕрле-и,
Пăхатăп тĕмсĕлсе цехсем еннех.

Поэзи тĕнчине чун туртмасассăн,
Эп ĕçлĕттĕм унти йышпа пĕрле.
Тунсăхласа çитсен, сывлап та ассăн
Тухса утап çĕн чăнлăх еннелле...

## XXII

Ак халь те тĕлĕнсе кайса çӳретĕп
Пин асаматлă тракторостройра.

Катмар цехсем ӳсеҫҫӗ ретӗн-ретӗн
Чӑваш ҫӗршер ҫул тар тӑкнӑ уйра.

Хӑш чух эп кӑшт кӗвӗҫерех сӑнатӑп
Монтажниксен «хӗвеллӗ кастине»:
Вӗсем халь хитререх пиртен—сӑнпа та,
Ӗҫ тумӗпе те: кур-ха каскине—

Каччӑсене мӗнле маттурлатать вӑл,
Паттӑрлатать те пулӗ, тупата.
Эй, яшлӑх, яшлӑх! Иртрӗ вӑл...
Ҫун, татӑл —
Ҫук, таврӑнаймӑн тепӗр хут унта.

## XXIII

Тӑван ҫӗршывӑн пултаруллӑ ӗҫӗ
Хавхалантарнӑран юрлас килет.
Унран вӑй-хал илсе пиҫет поэзи:
Вӑл — манӑн пурнӑҫ, юрату, тивлет.

Талӑкӗпех — ан ҫулӑхайтӑр канӑҫ!—
Шыратӑп ӑшӑ, витӗмлӗ сӑмах.
Монтажник ӗҫӗнчен, тен, тертлӗ ман ӗҫ—
Саманаран тӑвасшӑн эп сӑнар...

Касмӑкпала кӑкарнӑ кӑйкӑр евӗр
Ҫыру сӗтелӗ хушшинче ларса
Халтан кайсан, кӗрет кунҫул кӗрлевӗ
Алӑкӑма яри уҫса ярса.

Вара ҫӗн пурнӑҫпа туллин сывлатӑп
Ӗҫхалӑх тунӑ тинӗс хӗрринче.
Е вут умне чӗнет те аслӑ Атӑл
Чуна уҫать тӑванлӑх картинче.

## XXIV

Кăшт каннă май шĕкĕлчесе тухсассăн
Çăлтăрсенчен тусан пĕрчи таран,
Хăш чух пулать-ха сывлани те ассăн,
Ытла хĕрсе кайни те — хушăран...

Анчах ар йышĕн тĕтĕрме пур чĕлĕм,
Пур шăлйĕрен—çĕклейĕ кăмăла.
Чунри, чун патĕнчи... Итле те тĕлĕн:
Лару-тăру мĕнле — сăмах çапла...

Ĕçрен асли тĕнчемĕрте мĕн пултăр?—
Вăл чун хавалĕ, пурнăç, чыс, илем.
Çын тырă актăр, çурт-йĕр, тинĕс тутăр,
Ăна телей те ырлăх пехиллем.

...Чăваш каччи, палланă газосварщик,
Çиçтерчĕ çиçĕмле асаматне —
Вĕркет ун шевлинчи тĕссен хăвачĕ!
Аса илеп ачалăх самантне...

## XXV

Çап-çут йĕр хăварса çиçет те çуттăн
Сопло минорлă кĕвĕ кĕвĕлет —
Çын аллинчи асамлă симĕс çулăм
Пĕр вĕçĕм çуралать, ӳсет, вилет...

Е мăкăнь çеçкилле çилпе асать вăл,
Е пĕчĕк ялавла вĕл-вĕлкĕшет,
Е тимĕр суранне çуллать асаплăн,
Е пĕчĕк çăлтăр евĕр тĕлкĕшет...

Тĕнчемĕр илемне упрать пек ĕмĕр
Этем чĕри пек çунакан вутра.

Сӳнме памасть ӑна хӑюллӑ ӗмӗт —
Хушсах тӑрать хӗрӳлӗх вӑхӑтра.

## XXVI

Шухӑшӑмсен фантазилле ҫуначӗ
Пулӑшнипе пуласлӑха вӗҫеп.
Сопло-комета тин цехра ҫунатчӗ,
Халь вӑл — ракета, улшӑннӑ веҫех.

Тӗлӗнмелле курӑнусем сӑнарлӑн
Тухаҫҫӗ умлӑн-хыҫлӑн куҫ умне.
Хура тӗксӗмлӗхе сирсе сӑнатӑп
Эп асамат пек космос шуҫӑмне.

Унта та сварка ҫиҫӗмне куратӑп —
Монтажниксем ӗҫлеҫҫӗ уҫлӑхра.
Планетӑсем енне вӗҫес карапӗ,
Тен, пӗчӗкех те мар пуль уйӑхран.

Ак плазма та ҫын ӑстӑнӗшӗн уҫӑ —
Ҫӗн хӗвелсем ҫунаҫҫӗ тӳпере.
Этем унччен курман тӗссемлӗ шуҫӑм
Асаматпа кӗтсе илет пире.

## XXVII

«Тӗнче ик тӗслӗ ҫех...» — текен ҫын чухӑн.
Пӗр тӗспеле ҫырлахакан — айван...
Асамата ҫичче пайланӑ чуххӑм
Тӗссен улшӑнӑвне курман тӑван...

Поэзин йӑлтӑр хунарне чӗртетӗп,
Парнелесе хаваслӑх ҫутине:

«Куçри асаматсем, ан сӳнĕр,—тетĕп,—
Элчел сивви шăнтмасăр çын чунне!»

Пепкен таса, тăп-тăрă сывлăм-куçĕ,
Хĕр куçĕнчи чечен, вĕри хĕлхем,
Хĕрарăм куçĕ çутнă ăшă шуçăм —
Тĕлĕнмелле асаматсем хăйсем.

Çын куçĕнчен хитри мĕн пултăр, чăн та,
Тĕсрен пуян илемлĕ тĕнчере?!
Ан сӳнтĕр куç шăрçи, нихçан ан шăнтăр
Таса çăлкуçĕ унăн сивĕре.

Хальччен кун евĕр пурнăçа савманччĕ—
Тен, уçăлсах çитменччĕ пуль куçсем...
Тав илемӳшĕн, уçлăх асамачĕ!
Сыре тав, çак çĕр çинчи тĕссем!

## ТУПМАЛЛИ

ÇУТ ТĔНЧЕ
ВУЧАХĔН ĂШШИНЧЕ
*Сăвăсем*

«Тăван кĕтес çинчен эп хыврăм сăвă...» 5
Çут тĕнче вучахĕн ăшшинче . . . . . —
«Чăвашăмсем, ларар-и куçа-куçăн...» . . 8
«Ал çупса мар, хĕрӳ ĕçре хытартăм...» . 9
«Эп сирĕнпе пĕрле, тăван тавралăх, Атăл...» 10
«Çунса курмасăр вут мĕнне пĕлмерĕм...» 11
«Тęмле имшер хитрелĕх мĕлки мар...» . —
«Çĕр-çанталăк тӳлек, çутă, лăпкă...» . . 12
Тымарлă сăмах, çунатлă сăмах . . . 13
Кунта эп кайкăн-килкĕн мар . . . . . —
«Инçет—инçетрисен куç умĕ имĕш...» . 14
«Арласаччĕ кĕмĕл йĕкепе...» . . . . . —
«Таса, çуткам шур юр!..» . . . . . . 15
«Эп чипер çын пирки йăнăшман-и?..» . —
«Çиçĕм çиçет—çӳçĕм кĕрет...» . . . . . 16
«Ăшри ачашлăх хывнă ĕмĕт çулĕ...» . . —
«Çулăм сӳнчĕ, вутпуççи арканчĕ...» . . 17
«Вĕçсĕр çут тĕнче...» . . . . . . . . . —
«Кĕрхи чечек çинчен чечек çине...» . . 18
«Калаймастăп, татах калаймастăп...» . —
Анне парни . . . . . . . . . . . . . 19
«Çил кӳлсе сивĕ килчĕ...» . . . . . . . 20

«Хĕрсе ĕçлетпĕр—ăнтăлатпăр...» . . . —
«Пĕрре пурнатпăр пиллĕ тĕнчере...» . . . 21
Çутă кун, тĕттĕм каç . . . . . . . . . 22
«Пиçет пилеш, пиçет палан...» . . . . . —
«Сăмах хакне кунçул тивлечĕпе...» . . . 23
«Капăр ăшлă ют килте...» . . . . . . —
Чир . . . . . . . . . . . . . . 24
«Пĕр кун çеç пурăнтăм...» . . . . . . . —
«Тăван чĕлхерен ан юстар-ха, кунçул...» . 25
«Кĕтрĕм, кĕтрĕм—кĕтсе илеймерĕм...» . 27
«Куллен-кунпа уяван çĕр пин сунăм...» . 28
«Чапăр çеçкере...» . . . . . . . . . —
«Кӳренчĕк—куççăр, кĕвĕç ĕçĕ—кĕвсĕр...» 29
«Асамат кĕперĕ—йӳнчĕк...» . . . . . . —
«Çепĕçлĕхпе çирĕплĕхе типтерлĕн...» . . 30
«Пиллĕхлĕ тĕнчем...» . . . . . . . . —
Тĕкел йĕрке—мăшăр çунат . . . . . . 32
«Чăваш айван, ялан ыр ятлă...» . . . 33

СӲНМИ ВУТ-ÇУЛĂМ

*Сăвăсем. Микропоэмăсем*

«Çулăмланчĕ ĕмĕр кĕркунни...» . . . 34
«Пурнăç ирĕ... Чĕнӳллĕ пуласлăх...» . . —
«Сасартăк ар çулне эп çитрĕм...» . . . . 35
«Пĕлĕтсем ерипен каплансассăн...» . . —
«Çут кĕреке. Сĕтел...» . . . . . . . . 36
Вăхăт : . . . . . . . . . . . . . 37

ÇĔРШЫВĂМ,
ЭС—ÇĔНĔЛĔХ АМĂШ

*Микропоэма* . . . . . . . . . . 39
«Каçĕ! Ăшă та шăв-шавсăр...» . . . . . 41
Тăвăлта . . . . . . . . . . . . . 42
«Çуллă, сиплĕ, ăшă çумăр çунă...» . . 43

«Чĕрем, хăçан сан еккӳне чухлайăп?..» . 44
Шупашкар çăлкуçĕ . . . . . . . . —
Яшлăх паркĕпе сывпуллашни . . . . 45
«Тинĕс, çĕнĕ тинĕс...» . . . . . . . . 46
Ĕçлĕ Атăл . . . . . . . . . . . . . 47
«Таçти ют çĕр мар хăнана килнĕ вырăн...» 49
«Тĕлпулу е уйрăлу вокзалĕ...» . . . . . 50
«Вĕçсĕр-хĕрсĕр, тарăн океан...» . . . . . —
«Урать урам—у-у! у-у! улу...» . . . . . —

ÇАЛТАРЛА
ÇУРТСЕМ

*Микропоэма* . . . . . . . . . . 52
«Çук, амаçури мар...» . . . . . . . . 53
Илемпи юрри . . . . . . . . . . . 54
Ăсталăх . . . . . . . . . . . . . 55
«Куçран куçа çиçет-и чун çути...» . . . . —
«Аннеçĕм пур чухне хăйматлăх
суйламарăм...» . . . . . . . . . . 56
«Ăçта-ши «Чĕререн савап!» тесе...» . . . —
«—Таван уй-хире юрататăп! — тесе...» . 57

СӲНМИ ВУТ-ÇУЛĂМ

*Микропоэма* . . . . . . . . 59
«Тăван Çĕршыв çинчен кашни сăмахăм,
сăввăм...» . . . . . . . . . . 60
«Эй, хывасчĕ ман ялан юрату юрри...» . 61
«Ик хевтеллĕ пек туптасчĕ сăввăма...» . 62
«Пĕчĕк тимшĕн çунса
пăшăрханăп-и халь...» . . . . . . 63
Чăнлăх сасси . . . . . . . . . . . —

АЧАЛАХ УРХАМАХĔ —
ÇИЛÇУНАТ *Поэма* . . . . . . 65

ÇĔР ÇИНЧИ ИЛЕМ

*Сăвăсем*


Хăмăш юрри . . . . . . . . . . . . . 90
«Сип-симĕс хĕмлĕ çулăм чăл çутатчĕç...» 91
«Эп шăкăл-шăкăл калаçу çеммин...» . . . 92
«Хĕвел ансан, çут çăлтăр илĕртет...» . . . 93
«Шур çеçкине пыл хурчĕ сăрнă курăк...» —
Пĕр пĕлĕше... . . . . . . . . . . 94
«Тăван-пĕтен пил-халалне ан итлĕр...» . —
«Е талкăшса, е танкăшса утатăп...» . . 95
«Кĕмĕл чăрăш, ем-ешĕл çăкалăх...» . . —
«Çуркунне. Юр ирĕлет сий-сийĕн...» . . 96
«Шурай пек шурă шăкăрин шăнкав...» . 97
«Тулли хĕвел, çур уйăх тӳпере...» . . 98
Кĕрхи юрату . . . . . . . . . . . —
«Хĕвел тавра, çур уйăх питĕнче...» . . 99
«Хурхуххин шап-шур сĕтекĕпе...» . . . 100
«Пепкенĕн евĕр çепĕç те пымаклă...» . . —
«Савăш кимĕ—сарă савăшнай...» . . . 101
«Анлă Атăл — çут çул...» . . . . . . 102
«— Эй, мучей, ăçта каян?..» . . . . . —
«— Кăштах пилĕксене тăсса илер-и?..» . 103
Чуччу . . . . . . . . . . . . . . 104
Вăрăм элеги . . . . . . . . . . 105
«Чӳпĕкленет ама тирекĕн тумĕ...» . . 106
«Йăл кулчĕ ир сар каччă куçĕпе...» . . —
«— Тĕнчене — вăл хăй мĕнле — çапла...» —
«Хăва çулçи çутинче...» . . . . . . . 107
«Мăскалпала виçместпĕр телее...» . . . 108
«Ту хысакне çĕкленнĕ пĕр айван...» . . 109
«Сарăтутлă сарă хĕр...» . . . . . . . —
«Кун чăн та вăрăмланчĕ мар-и?..» . . . 110
«Хĕл хаярĕ шăнтрĕ-ши куçа?..» . . . 111
«— Епле чипер, таса пикеччĕ!..» . . . 112
«Илемпе тирпей хуçи — вăр-вар,
ĕçчен пике...» . . . . . . . . . . 113

«Епле черченкӗ папаксем кӑларчӗ...» . —
«Сӑмахпала кунҫул нӳсне...» . . . . . . —
Тӗл пулар-и — паллашар-и... . . . . 114
«Питӳ ҫинче ирччен ик лӗпӗш ларчӗ...» . 115
«Ҫӑвар тути пӗтет... Сиплен ҫӗр тӗрлӗн...» —
«Атӑл хӗррине утса килем...» . . . . 116
«Куйкӑрӑшӑн ҫутӑ ҫунаттин...» . . . 117
«Инҫетелле пӑхатӑп алӑ витӗр...» . . . —
Тав, мухтав, тӑванӑмсем, сире! . . . . 118

АЛӐРИ
АСАМАТ
*Поэма* . . . . . . . . 119

**Василий ЭНДИП**
**(Антипов Василий Иванович)**

**ПЕСНЬ ОБНОВЛЕНИЯ**

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор **В. О. Максимов**
Художник и художественный редактор
**Э. М. Юрьев**
Технический редактор **Г. С. Самсонова**
Корректор **Р. П. Кудряшова**

ИБ 1473

Сдано в набор 25.07.84. Подписано в печать 16.11.84. НТ 29958. Формат 70×90 1/32. Бумага типографская № 2. Гарнитура школьная. Печать высокая. Усл. печ. л. 5,26. Усл. кр.-отт. 5,41. Уч.-изд. л. 5,27. Тираж 1500 экз. Заказ № 2898. Изд. № 57. Цена 65 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

Энтип В. И.

Э 67 Юрату кĕнеки: Сăвăсем, поэмăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1984, 144 стр.

65 п.

Пултаруллă поэт хăйĕн çĕнĕ сăввисемпе поэмисенче юрату хăватне, ĕç илемĕпе хавхаланнă хастар çынсен шухăш-кăмăлне, вĕсен ăсталăхне мухтаса юрлать. Кĕнекери произведенисенче паянхи пурнăçăн хавалĕ лайăх курăнать.

ББК 84.3Чув

Э $\frac{4702650000-151}{М\ 136(03)-84}$ 57—84

65 п.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ